чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

ССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

ШĂМАТ КУН 2014, çу /май/ 17

88-89 /26494-26495/ № №   Хакĕ ирĕклĕ   WWW.hypar.ru

# Çамрăк корреспондентсен пĕрремĕш слечĕ. Чăваш сăмахĕ ылтăнран та хаклăрах...

***Çу уйăхĕн 15-мĕшĕнче Шупашкарта «Хыпар» Издательство çурчĕн çамрăк корреспондентсен слечĕ иртрĕ. Республикăри тĕрлĕ район-хулара пурăнакан шкул ачисем, çамрăк 100 ытла автор, Чăваш патшалăх пукане театрне пухăнчĕç. Уява ЧР информаци политикипе массăллă коммуникацисен министрĕ Валентина Андреева, «Хыпар» Издательство çурчĕн директорĕ-тĕп редакторĕ Алексей Леонтьев, Чăваш наци телерадиокомпанийĕн директорĕ Александр Магарин, «Советская Чувашия» хаçатăн тĕп редакторĕ Владимир Васильев, ЧР Вĕренӳ министерствин пай пуçлăхĕ Инесса Ядранская хутшăнчĕç.***

Чи малтанах пухăннисене Валентина Андреева министр саламларĕ.

– Сăмахпа ĕçлесси питĕ яваплă та пĕлтерĕшлĕ ĕç. «Сăмах ылтăнпа тан», – тенĕ ваттисем. Эсир чăвашла хайлавсем çыратăр, журналист ăсталăхне туптатăр. Çавăнпа чăваш чĕлхин пуласлăхĕ сирĕнтен килет. Ăнăçу сунатăп сире, хисеплĕ ĕçтешсем, – терĕ вăл.

2 стр.



# Акци: çу уйăхĕн 30-мĕшĕччен 20% йӳнĕрех çырăнтараççĕ

"Хыпар" Издательство çурчĕн хаçачĕсемпе журналĕсене 2014 çулăн иккĕмĕш çурри валли почта уйрăмĕсенче çу уйăхĕн 30-мĕшĕччен 20 процент йӳнĕрех хакпа çырăнтараççĕ. Шел те, почта хăйĕн хакне пĕчĕклетмерĕ, анчах яллă вырăнта пурăнакансене "Хыпар" хаçат çырăннăшăн пĕр кĕленче тип çу парса хавхалантарать.

Çу уйăхĕн 30-мĕшĕ хыççăн хаçат-журнал хакĕсем мĕнле пуласси таблицăра кăтартнă.

Çакна шанатпăр: почта тытăмĕн Мускаври ертӳçисем хаçат-журнал çырăнмалли хаксене самаях пысăклатрĕç пулин те пирĕн тусăмăрсем, чăвашсем, юратнă кăларăмĕсенчен писмеççех, чун çимĕçне çырăнса илеççех. Лайăххарах тĕшмĕртсен, хаçат е журнал çур çулта миçе номер тухнине тĕпе хурсан хаксем капашсăр темеллех мар. Калăпăр, "Хыпара" çырăнмалли хака, 744 тенкĕ те 12 пуса, 125 çине /вулакан патне çур çулта çакăн чухлĕ пырса тăрать/ пайласан "Хыпар" хаçатăн пĕр номерĕ пĕтĕмпе те 6 тенке яхăн çеç тăрать.

Куллен тухакан "Хыпара" çырăнма укçа-тенкĕ çитместех пулсан "Хыпар - шăмат куна" суйласа илĕр. Вăл чылай йӳнĕрех. Çемье бюджетне тата та перекетлес тесен, район центрĕсенче пурăнакансене, пирĕн хаçатсене, журналсене "Чăваш пичечĕн" киоскĕсенче çырăнма сĕнетпĕр.

**Кĕске справка**

*"Хыпар" хаçатăн каталог хакĕ /редакцие кĕрекен укçа/ 6 уйăха – 144 тенкĕ, çырăнтару хакĕ – 744 тенкĕ те 12 пус. 600 тенкĕ почтăна кайнине вулакан тавçăрса илчĕ пулĕ.*

| Кăларăмсем | Çырăнтару хакĕсем | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| | Почта уйрăмĕсенче | | «Чăваш пичет» киоскĕсенче | «Советская Чувашия» киоскĕсенче | Редакцире |
| | акци вăхăтĕнче | акци хыççăн | | | |
| Хыпар | 715-32 | 744-12 | 279 | 279 | 144 |
| Хыпар-шăмат кун | 303-96 | 321-96 | 141 | 141 | 90 |
| Çамрăксен хаçачĕ | 347-16 | 375-96 | 231 | 231 | 144 |
| Чăваш хĕрарăмĕ | 312-24 | 340-44 | 213 | 213 | 141 |
| Сывлăх | 199-20 | 215-40 | 111 | 111 | 81 |
| Кил-çурт, хушма хуçалăх | 176-46 | 192-66 | 111 | 111 | 81 |
| Хресчен сасси | 356-28 | 379-08 | 162 | 162 | 114 |
| Хресчен сасси – Кил | 176-46 | 192-66 | 105 | 105 | 81 |
| Тăван Атăл | 279-48 | 319-08 | 246 | 246 | 198 |
| Капкăн | 163-44 | 185-04 | 144 | 126 | 108 |
| ЛИК (Литература. Искусство. Культура) | 120-36 | 140-36 | 120 | 120 | 100 |
| Вести Чувашии | 282-12 | 310-92 | 186 | 186 | 144 |
| Собрание законодательства Чувашской Республики | 629-58 | 743-58 | 660 | 660 | 570 |
| Тантăш | 271-44 | 289-44 | 132 | 132 | 90 |
| Самант | 157-02 | 181-02 | 156 | 156 | 120 |
| Тетте | 125-52 | 143-52 | 111 | 111 | 90 |

# Çамрăк корреспондентсен пĕрремĕш слечĕ. Чăваш сăмахĕ ылтăнран та хаклăрах...





/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

Алексей Леонтьев пичет журналистикин паянхи йывăрлăхĕсем çинчен каласа кăтартрĕ. Раççей почти çырăнтару хакне палăрмаллах хăпартнăран вулакансен йышĕ сыхланса юлтăр тесен сахал мар тăрăшмаллине палăртрĕ. Чăнах та, 744,12 тенкĕрен 144 тенки кăна редакцие килет, ытти йăлтах почтăра юлать.

– Эпир 16 хаçат-журнал кăларса тăратпăр, вĕсенчен тăваттăшĕ ачасемпе çамрăксен валли: «Тетте», «Тантăш», «Самант» тата «Çамрăксен хаçачĕ». Эсир вĕсемпе çыхăну тытатăр. Ку – «Хыпар» Издательство çурчĕн пĕрремĕш слечĕ. Малашне эпир ăна çулленех тата анлăрах ирттереме палăртатпăр, – тĕллевĕсемпе паллаштарчĕ Алексей Петрович. Унтан вăл чи маттур корреспондентсене «Хыпар» Издательво çурчĕн Тав çырăвĕпе чысларĕ.

Елчĕк районĕнчи Аслă Елчĕк шкулĕнче вĕренекен Юлия Адюкова сăмах илчĕ. Вăл «Тантăш» хаçата вуланине, йăмăкĕ «Тетте» журнала алăран яманнине, аппăшĕ «Саманта» кăмăлланине, амăшĕ «Çамрăксен хаçачĕн» кашни статйине шĕкĕлчение, ашшĕ вара кашни кунах почтальон «Хыпар» хаçата килсе парассине кĕтнине пĕлтерчĕ. Мĕнле маттур çемье! Адюковсем хăйсем те чăваш кăларăмĕсемпе туслă, ачипăчине те тăван сăмаха юратма мĕн пĕчĕкрен хăнăхтараççĕ.

– Ачасем, эсир мана тĕлĕнтеретĕр. Сирĕн заметкăрсене, статйăрсене савăнса вулатăп, темиçе хут пăхса тухатăп. 5-мĕш, 6-мĕш классенче вĕренекенсем çавăн пек ăста çырма пултарнăшăн хĕпĕртетĕп. Малашне те çырăр, çакă чунпа пуянланма пулăшать, – палăртрĕ Галина Зотова вĕрентекен.



Çамрăк корреспондентсем пукане театрĕн «Турă патне çырнă 14 çыру» спектаклне куриччен ăсталăх класĕсене хутшăнчĕç. Вĕсене «Тантăшпа» «Тетте» редакторĕ Владимир Федоров, «Самант» редакторĕ Владимир Степанов, Раççейри çамрăк журналистсен лигин Чăваш Енри координаторĕ Евгений Суховерко тата çак йĕркесен авторĕ ирттерчĕç.

Слет вăхăтĕнче çамрăк журналистсем пĕр-пĕринпе çывăхрах паллашрĕç, туслашрĕç, чăваш хаçат-журналĕпе малашне те çыхăну тытма шантарчĕç. Пирвайхи слета хутшăннисен хушшинче хăйсен пурнăçне чăваш журналистикипе çыхăнтаракансем пуласса шанатпăр.

■ **Дмитрий МОИСЕЕВ.**

Сергей ЖУРАВЛЕВ сăн ӳкерчĕкĕсем

**РЕДАКЦИРЕН. «Хыпар» Издательство çурчĕ çамрăк корреспондентсен I слетне ирттерме пулăшнăшăн «ДОРИСС» АУО генеральнăй директорне И.В.Рощина, «ТУС» строительство компанийĕ» АХО генеральнăй директорне, ЧР Патшалăх Канашĕн депутатне Н.Ф.Угаслова, Чăвашпотребсоюз Канашĕн председательне, ЧР Патшалăх Канашĕн депутатне В.М.Павлова, Чăваш пукане театрĕн директорне Е.А.Абрамовăна, «Антей-сервис» компани директорне А.Н.Ивановăна, «Информ-медиа» РПФ генеральнăй директорне Э.Н.Максимова чунтан тав тăвать.**

### Чăваш Республикин пиллĕкмĕш суйлаври Патшалăх Канашĕн черетлĕ çирĕм пĕрремĕш сессийĕ уçăласси çинчен

Чăваш Республикин пиллĕкмĕш суйлаври Патшалăх Канашĕн черетлĕ çирĕм пĕрремĕш сессийĕ 2014 çулхи çу уйăхĕн 20-мĕшĕнче Шупашкар хулинчи Правительство çурчĕн Ларусен пысăк залĕнче /Шупашкар хули, Президент бульварĕ, 17 çурт/ уçăлать. 10 сехетре пуçланать.

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕсене тата чĕннĕ хăнасене Правительство çурчĕн Ларусен пысăк залĕнче 2014 çулхи çу уйăхĕн 20-мĕшĕнче 9 сехетрен пуçласа регистрацилеççĕ.

Ыйтса пĕлмелли телефон: 64-21-65.

*Ăслăлăх*

## «Анлă Атăл çамрăклăхĕ» старт илчĕ

***Регионсен хушшинчи вĕренекен çамрăксен наука пултарулăхĕн XVI фестиваль-конференцийĕ ĕнер И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн культура керменĕнче уçăлчĕ.***

Професси пĕлĕвĕ паракан учреждениесенче тата аслă шкулсенче пĕлӳ илекен студентсен хăйне евĕр интеллект тупăшăвне старт памашкăн Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев та çитрĕ.

Ăслăлăх фестивальне кăçал 835 çын хутшăнать. Вĕсен йышĕнче – республикăри 39 вĕренӳ организацийĕн, Пушкăртстанпа Мордва республикинчи тĕрлĕ вуз студенчĕсем. Конференцин эксперт комиссийĕ 19 секцире 53 ушкăн йĕркеленĕ.

Анлă форума уçнă хыççăн Чăваш Ен ертӳçи ЧПУн историпе филологи тата журналистика факультетĕнче йĕркеленĕ секцисенче пулчĕ. Тĕплĕнрех – çитес номерте.

**И.ПУШКИНА.**

*Çурт-йĕр*

## Федераци пулăшăвĕ ӳсет

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Раççей Федерацийĕн строительство тата çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх министрĕ Михаил Мень ирттернĕ селектор канашлăвне хутшăнчĕ. 2012 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕччен пурăнма юрăхсăр тесе йышăннă çуртсенчи çынсене хăтлă хваттерсене куçарас ыйту епле пурнăçланнине сӳтсе яврĕç.

Федерацин чылай субъектĕнче ку енĕпе лару-тăру йывăр. Уйрăмах кăткăс 28 регионтан пиллĕкĕшĕнче тĕпчев ирттернĕ те çав хутлăхсенче пĕлтĕртенпе пĕр çынна та пурăнма май çук çуртсенчен хăтлă хваттерсене куçарманни палăрнă.

Субъектсенчи строительство организацийĕсене хавхалантарас тата программăпа килĕшӳллĕн çурт-йĕр тăвас ĕçе хăвăртлатас тĕллевпе РФ Правительстви пулăшу виçине çĕнĕрен пăхса тухнă. Унччен регионсем уйрăм категориллĕ граждансем валли çурт-йĕр тума хăйсен бюджечĕнчен 62% укçа уйăрнă, малашне вăл 50 процентран ытла пулмĕ. Михаил Мень пĕлтернĕ тăрăх – пулăшăвăн 12 процентлă ӳсĕмне саплаштарма федераци бюджечĕнчен 34 млрд та 600 млн тенкĕ хушма кĕмĕл куçараççĕ.

Çынсене пурăнма юрăхсăр çуртсенчен хăтлă хваттерсене куçарма йышăннă программа хальлĕхе çĕр-шыври 15 субъектра çеç ăнăçлă пурнăçланать. Çиччĕшĕнче строительство графикран маларах та пырать, вăл шутра – Чăваш Республикинче те.

Чăваш Енре ишĕлес патне çитнĕ çуртсенчи 174,3 пин тăваткал метр лаптăкра пурăнакан 13,3 пин çынна /5 пин çемьене/ хăтлă хваттерпе тивĕçтерме 4979,6 млн тенкĕ кирлĕ. РФ Правительствин çĕнĕ йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн республика тата район бюджечĕсем çак суммăн çуррине уйăрĕç.

Хальхи вăхăтра программăн пĕрремĕш тапхăрĕ пурнăçа кĕрет. Ун валли 1381,3 млн тенкĕ пăхса хунă.

■ **В.ГРИГОРЬЕВ**

## Вăрмана кĕрсе çӳреме чарнă

***ЧР çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министрĕн хушăвĕпе килĕшӳллĕн çу уйăхĕн 31-мĕшĕччен транспорта, граждансене республика вăрманĕсене ирĕккĕн кĕрсе çӳреме чарнă.***

Чăтлăх-вĕтлĕхре пушар тухас хăрушлăх IV класпа танлашать. Хушăва вăрманлăхсем, вут-кăварпа кĕрешекен службăсем пурнăçлаççĕ. Вăрманта пушар тухасран сыхă тăраççĕ. Уйрăммăн илсен симĕслĕхе кĕрекен иртен-çӳрен çулне пӳлеççĕ.

Сывлăш вĕриленнĕрен ешĕллĕхри пĕлтĕрхи çулçă, хăрăк-марăк типĕ, шăрпăк пĕрчине сӳнтермесĕрех пăрахсан çийĕнчех вут хыпса илет. Вут-кăварпа кĕрешекенсем талăкăн кирек хăш сехетĕнче те дежурствăра. Пушар пысăк тăкак кăтартма пултарассине лайăх пĕлеççĕ. Çу уйăхĕн 14-мĕшĕнче федерацин çут çанталăкăн уйрăмах сыхлакан «Сăрçи» лаптăкĕн Атрать станцийĕнчен 6 çухрăмри 13-мĕш кварталĕнчи /10,5 га/ йывăç-тĕм çунса кĕлленнĕ. Горький чукун çулĕпе пуйăс иртнĕ хыççăн вăрмана вут хыпнă теççĕ. Хальхи вăхăтра пушар сăлтавне тĕплĕнрех тĕпчеççĕ. Ăна федерацин пушар службин 4-мĕш уйрăмĕн ушкăнĕ, министерствăн вăрман пушарĕпе кĕрешекен службин, Кире вăрманлăхĕн, «Сăрçи» ĕçченĕсем сӳнтернĕ. Пуйăс шывпа тивĕçтерме пулăшнă.

**Ю.МИХАЙЛОВ.**

# Ачасен хăрушсăрлăхĕшĕн

***Ача-пăча сывлăхне çирĕплетмелли çуллахи кампани пуçланас умĕн МЧС ĕçченĕсем профилактика тата пушар тăрăмĕн тĕрĕслевĕсене ирттересçĕ. Çавăн пекех вĕсем асăннă учреждениесенче тактика вĕренĕвĕсем йĕркелеççĕ.***

Çак кунсенче Шупашкар гарнизонĕн пушарнăйĕсем Раççей МЧСĕн Чăваш Республикинчи тĕп управленийĕн пуçлăхĕ Станислав Антонов генерал-майор ертсе пынипе хăйсен ăсталăхне «Чайка» санатори комплексĕнче /вăл ачасене каникулсен вăхăтĕнче йышăнать/ иртнĕ тактика вĕренĕвĕнче тепĕр хут кăтартрĕç. Сценарипе килĕшÿллĕн санаторин пĕр корпусĕн 2-мĕш хутĕнче пушар тухнă.

– Çакнашкал мероприятисенче эпир асăннă учреждениесенче вăй хуракансене инкек тухас тăк хăйсене тĕрĕс мĕнле тытмаллине вĕрентес тетпĕр. Тепĕр тĕллев – ача-пăча сывлăхне çирĕплетмелли лагерьсене хăрушсăрлăхпа тивĕçтерессишĕн яваплă вăйсемпе тата хатĕрсемпе тачă çыхăну тытса ĕçлессине йĕркелесси. Паян администратор хăйĕн тивĕçĕсене, инкек пулас тăк чи малтан мĕн тумаллине лайăх пĕлнине кăтартса панă: «пушар» тухнине сиссенех вăл сасă хыпарлавĕн тытăмне хута ячĕ, корпусри çынсене урама кăларчĕ, пушар хуралне чĕнсе илчĕ, – терĕ Станислав Антонов.

Часах 41-мĕш пушар чаçĕн /Шупашкар районĕ/ пĕрремĕш расчечĕ килсе çитрĕ, «вут-çулăмпа» кĕрешме тытăнчĕ. Кĕçех Шупашкар хулинчи пушар машинисем кăшкăртса килчĕç: кун пек учреждениесенче тухакан синкер пысăк хăрушлăхлă шутланать, çавăнпа тĕрлĕ техникăна ярăççĕ. «Чайка» корпусне «сыхласа хăварма» 5 автоцистерна, 1 автопусма, штаб автомобилĕ, баллонсене сывлăш тултаракан машина тата ыттисем хутшăнчĕç. Пушар сÿнтерекен оперативлă штаба васкавлă хыпар çитрĕ: канакан темиçе çын тĕтĕм-сĕрĕмпе тулнă 2-мĕш хутрах «юлнă». Вут тыткăнне «лекнисене» çăлмашкăн газ-тĕтĕм хÿтĕлевĕн службин хастарĕсем ыткăнчĕç. Вĕсем «шар курнисене» часах шыраса тупрĕç, уçă сывлăша илсе тухса медицина ĕçченĕсен аллине пачĕç. Тепĕр икĕ çынна вара корпус тăррипчен автопусмапа антарчĕç. Пĕтĕмлетсе каласан – пурте чупсах ĕçлерĕç. Тактика вĕренĕвне пушар хуралĕн Шупашкарти гарнизонĕн йышĕпе пĕрле ШĔМ, ÇÇХПИ, васкавлă медицина пулăшăвĕн ĕçченĕсем, газ службин специалисчĕсем тата энергетиксем хутшăнчĕç.

– Чи кирли – администраци представителĕсем çухалса каймanni. Синкерĕн малтанхи тапхăрĕнче никам та хăраса-сехĕрленсе ÿкменни, хаклă вăхăта сая яманни. Вĕренĕве хутшăннă службăсем хăйсен умĕнчи тĕллеве йĕркеллĕ пурнăçларĕç, – журналистсен ыйтăвĕсене хуравланă май пĕлтерчĕ Станислав Юрьевич.

Çу уйăхĕ вĕçлениччен çакнашкал вĕренÿ ача-пăча сывлăхне çирĕплетмелли пĕтĕм лагерьте /çул çитменнисем талăкĕпех пулаканнисенче/ иртĕ. Çĕртме уйăхĕнчен пуçласа вĕсенче тата шкулсен çумĕнче йĕркеленĕ лагерьсенче пушара хирĕçле инструктажсем, тренировкăсем йĕркелеме палăртнă.

■ **Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА**

Госслужба занятости Чувашии

# Чун туртăмне кура суйла,

## е Çамрăксене професси ориентацийĕ парас енĕпе пухнă опыт çинчен



**Ĕç урлă выртать телей çулĕ.**
**Ытти çул ун патне илсе пымĕ.**
/Абу Шукур/.

***Этем пурнăçĕнчи яваплă утăмсенчен пĕри професси суйласси пулса тăрать. Ăна суйлани хамăр шăпана шыраниех тесе ахальтен каламаççĕ. Çавăнпа кун пек чухне çамрăк ăрушăн аслисен пулăшăвĕ ытлашши пулмĕ.***

### Малашлăх проекчĕ

Професси суйласа илес тĕлĕшпе ашшĕ-амăшĕн канашĕ, паллах, выранлă. Çапах та шанчăклă пулăшакансем – республикăри служба центрĕсен профконсультанчĕсем – шкулта вĕренекенсемпе профориентаци ĕçне йĕркелекенсем пулнине тивĕçлипе хакламалла. Вĕсем кашни çамрăка кăмăл-туйăмăн хăйне евĕрлĕхне кура тата унăн пултарулăхне шута илсе консультаци параççĕ, диагностика тăваççĕ. Унсăр пуçне ушкăн занятийĕсене ирттереççĕ, уçă алăксен кунĕсене, профориентаци уйăхлăхĕсене, професси ярмăрккисене, профориентацин тĕрлĕ мероприятине – конкурссемпе презентацисем, викторинăсемпе ĕçлев урокĕсем тата ытти те – йĕркелеççĕ.

Ачасем профориентаци вăййисене уйрăмах кăмăллаççĕ. Специалистсен шухăшĕпе – вăйă мелĕпе усă курни пулас профессири тата социаллă пурнăçри сăнарсене лайăхрах тата тарăнрах ăнланса илме май парать.

1-4-мĕш классенче вĕренекенсем «Чи лайăххи», «Кам вăл?», «Эпĕ кам пуласшăн?» вăййăсене хутшăнса професси тĕнчин тĕрлĕ енĕпе паллашаççĕ. 5-8 классенчи ачасене профориентацин «Эпĕ професси суйлатăп», «Никам пурăнман утрав» йышши вăййисемпе хăнăхтарусем, конкурссемпе викторинăсем сĕнеççĕ. 9-11 классенчи çамрăксем – пурнăç çулĕ çине тухма хатĕрленекенсем – валли специалистсем информаципе консультаци «Професси суйласси», «Ăнăçлă карьера тумалли утăм», «Малашлăх валли пилĕк проект» мероприятийĕсене йĕркелеççĕ. Унсăр пуçне шкулта вĕренекенсен професси пултарулăхне тата интересĕсене вĕсен ăс-хакăлĕн уйрăмлăхĕсене тĕпе хурса палăртмашкăн тестсем ирттереççĕ.

### Кам-ха рабочи пуласшăн?..

Республикăри промышленноç предприятийĕсенчен чылайăшĕнче рабочисен квалификациллĕ кадрĕ çитенĕксĕр. Юлашки çулсенче ĕçлев службин органĕсене çитернĕ вакансисен 80 проценчĕ рабочи профессийĕсемпе – кирпĕч купалакан, электрогазосварщик, наладчик, термист, монтажник, отделочник, плотник, столяр, фрезеровщик – çыхăннă. Çавăн пекех парикмахерсене, портнойсене, закройщиксене, çĕвĕçсене йыхравлакан нумай.

Хальхи вăхăтра республикăри ĕçлев службин органĕсенче регистрациленнĕ ĕççĕр граждансен 28,6 проценчĕ – 29 çула çитмен çамрăксем. Çакă чи малтанах рынокра ĕç вăйне сĕннипе ыйтни пĕр килменнипе çыхăннă. Апла пулин те темиçе çул ĕнтĕ профориентаци мероприятийĕсен тĕп пайне шкулти аслă классенче вĕренекенсене шута илсе ирттернĕ, профориентаципе çыхăннă ĕçе вара регионти рынок ыйтнине тĕпе хумасăр туса пынă. Çавна пулах вăтам пĕлÿ илсе пурнăç çулĕ çине тухнă çамрăксем самана ыйтакан специальноçсем, профессин пуçламăш тата вăтам пĕлĕвĕ паракан вĕренÿ заведенийĕсем пирки шухăшласах кайман тата вĕсем çинчен пĕлмен. Професси суйламалли никĕсе тата ĕç рынокĕн уйрăмлăхĕсене ăнкарманнине пула яш-кĕрĕмпе хĕрупраç чаплă профессисем еннелле туртăннă е пулас специальноçа юлташĕсене кура суйласа илнĕ. Колледжри тата техникумри вĕренĕве чылайăшĕ малашлăхсăрри выранне хунă, рабочи профессийĕсен ячĕ-сумĕ те янăраман.

Çавна май шкулта вĕренекенсемпе ирттерекен профориентаци ĕçне вăйлатма тивнĕ те.

### Волонтерсем пулăшаççĕ

Чăваш Ен Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин пуçарнипе темиçе çул каялла йĕркеленĕ «çавра сĕтеле» ЧР Вĕренÿ тата Культура министерствисем, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ тата И.Я.Яковлев ячĕллĕ ЧППУ представителĕсем хутшăннă, унта хăйсен ирĕкĕпе профориентатор пулса тăнисен республикăри «Эсĕ професси суйлатăн» акцине ирттермешкĕн пĕрремĕш килĕшĕве алă пуснă.

Асăннă мероприятин тĕп тĕллевĕ – шкулта вĕренекенсене профориентаци енĕпе кирлĕ пĕлĕве волонтер-профориентаторсем пулăшнипе парасси. Професси ориентацийĕн тытăмĕнчи волонтерсен юхăмĕ «рольсене улăштарас» тĕллеве тĕпе хурать: пĕрремĕш тапхăрта информаци илекен иккĕмĕшĕнче хыпар çăл куçĕ – волонтер – шутланать.

2008-2013 çулсенче 1022 студент волонтер-профориентатор пулнă, ял хуçалăх предприятийĕсемпе хресчен-фермер хуçалăхĕсен 200 ытла хастарĕ, çавăн пекех производство тытăмĕн, строительство комплексĕн, вулавăшсен представителĕсем, предпринимательсем, шкул директорĕсен воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕсем, психологсемпе педагогсем çак ĕçе хутшăннă. Акци ирттернĕ вăхăтра добровольцесем 5370 вĕренекене «рольсене улăштарма» хатĕрленĕ – çавсем кĕçĕн классенче пĕлÿ илекенсемпе профориентаци занятийĕсем ирттерме пултарнă.

Чăваш Ен Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин волонтер-профориентаторсене ачасен ÿсĕм уйрăмлăхне шута илсе занятисем, вăйăсем йĕркелемелли план-конспект туса хатĕрленĕ. Чи кĕçĕннисене, тĕслĕхрен, волонтерсем вăйă занятийĕсенче професси тĕнчипе паллаштарнă, аслă класра вĕренекенсемпе кăткăсрах темăсене сÿтсе явнă: вĕсене ĕç рынокĕ ыйтнипе сĕнни çинчен каласа панă, тепĕр 5-10 çултан кирлĕ пулакан вăл е ку професси пирки ăнлантарнă.

### Професси сĕмĕллĕ инсталляци

Икĕ çул каялла професси ориентацийĕн çĕнĕ тепĕр мелĕ вăй илчĕ. Республика Правительстви хушнипе ĕçпе тивĕçтерекен служба тата ЧР Вĕренÿ министерстви машиностроенире, строительствăра, общество апатланăвĕнче уйрăмах кирлĕ профессисене инсталляцилес енĕпе профиль центрĕсем йĕркелеме тытăнчĕç. Хальхи вăхăтра çавнашкал центрсене профессин вăтам пĕлĕвĕ паракан ултă учреждени никĕсĕ çинче уçнă.

Профиль центрĕсенче çамрăксем рабочи профессийĕсен тĕнчипе паллашса хăйсен тавра курăмне анлăлатнипе пĕрлех чун килĕштернине тата пултарулăхпа пĕр килнине суйласа илсе ку енĕпе хăйсене тĕрĕслесе пăхма пултараççĕ.

Центрсенче тĕрлĕ профессие сăнарлакан аудиторисем /залсем/ пур. Профессисен инсталляци центрĕсенче консультаци илме, тест витĕр тухма, ĕç рынокĕн социаллă адаптацийĕн программисемпе тренингĕсене хутшăнма май пур.

Профиль центрĕсен никĕсĕ çинче 2013 çулхи пуш, çу, çӳк уйăхĕсенче шкул ачисемпе вĕсен ашшĕ-амăшĕ, çавăн пекех служба органĕсенче учетра тăракан ĕççĕр граждансем валли профориентацин пĕрлехи кунĕсем иртнĕ. Вĕсене сакăр пин ытла çын хутшăннă.

Ачасем профессисен тĕрлĕ маршручĕпе çÿренĕ, рабочи специальноçĕсен экспозицийĕсемпе паллашнă. Демонстраци «залĕсенче» вĕсем интерьер япалисене, ятарлă тума, инструментсене курнă, предприяти-организаци представителĕсемпе тĕл пулнă. Кунтах профессисене презентациленĕ, кăмăл тăвакансене токарь, çăкăр пĕçерекен, кирпĕч купалакан тата ытти прфессие «туйса» илме май панă. Вĕренÿ заведенийĕсен педагогĕсем çамрăксем валли уçă уроксем тата мастер-классем ирттернĕ. Асăннă центрсенче Чăваш Ен Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин тата Шупашкар хулин халăха ĕçпе тивĕçтерекен центрĕн професси консультанчĕсем те ĕçленĕ, шкулта вĕренекенсем тест тĕрĕслевне йĕркеленĕ.

Профориентаци мероприятийĕсен эффективлăхне малашлăхра кăна туйса илессине пăхмасăр, ĕçлев центрĕсен специалисчĕсем ĕç рынокĕнче халех хăш-пĕр позици енĕпе ырă улшăну пуррине палăртаççĕ. Тĕслĕхрен, ĕç вăйĕн мобильлĕхĕ сисĕнмеллех лайăхланнă тата рабочи профессийĕсен ячĕ-сумĕ ÿснĕ.

**Чăваш Ен Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин пресс-служби.**

*Халӑх итлевӗ*

# Бюджет укҫи шута пушшех юрататать

***Кӗҫнерни кун Правительство ҫуртӗнче республикӑн 2013 ҫулхи бюджетне мӗнле пурнӑҫлани тӗлӗшпе халӑх итлевӗ иртрӗ. Унта Патшалӑх Канашӗн депутачӗсемпе министерствӑсен ертӳҫисемсӗр пуҫне общество организацийӗсен, массӑллӑ информаци хатӗрӗсен представителӗсем те хутшӑнчӗҫ. Интереслӗ те тӗплӗ калаҫу пулчӗ.***

Тӗп доклада вице-премьер – финанс министрӗ Светлана Енилина турӗ те – Финанс министерствин ертӳҫин должноҫӗнче ҫак кунсенче кӑна «тулли правалӑ» пулса тӑнӑскере ҫак ятпа чи малтанах ПК вице-спикерӗ Анатолий Князев саламларӗ, сывлӑх, тӳсӗмлӗх сунчӗ. Должноҫӗ, чӑнах та, питӗ яваплӑскер, тӗрӗсех, сывлӑхӗ те, тӳсӗмлӗхӗ те ытлашши пулмӗ. Ҫакӑ Светлана Александровна иртнӗ ҫул бюджетне пурнӑҫлани ҫинчен тунӑ отчетран та лайӑх курӑнать.

С.Енилина пӗлтернӗ тӑрӑх – республика бюджетне пӗлтӗр тупӑшсем тӗлӗшпе 35,6 млрд ытларах тенкӗлӗх пурнӑҫланӑ, тӑкаксем тӗлӗшпе – 36,8 млрд яхӑн тенкӗлӗх. Министр бюджетӑн социаллӑ тӗллевлӗхне пайӑррӑн палӑртрӗ. Калӑпӑр, тӑкаксен пысӑк пайӗ, 25,6%, вӗрентӳ валли кайнӑ, социаллӑ политикӑна тӗревлеме – 20,9%, сывлӑх сыхлавӗ валли – 17,6%. Ҫапах наци экономики ҫине те алӑ сулман, унӑн тӳпи 19,3% танлашнӑ.

Макроэкономика кӑтартӑвӗсен ырӑ туртӑмӗ бюджетӑн тупӑш пайне ҫирӗплетме пулӑшнӑ. Хамӑрӑн тупӑшсен тӳпи 20,4 млрд яхӑн тенке ҫитнӗ. Ҫав шутра налуксен калӑпӑшӗ 95,3% танлашнӑ. Кунта уйрӑм ҫынсен тупӑшӗнчен илекен налук тӳпи пысӑк – вӑл республика бюджечӗн налук тупӑшӗсен 31,4% тан. Организацисен усламӗнчен, пурлӑхран илнӗ налуксен калӑпӑшӗ те ӳсӗмлӗ. Ҫав вӑхӑтрах акцизсен тӳпи пӗчӗкленнӗ.

Кӑҫалхи кӑрлачӑн 1-мӗшӗ тӗлне патшалӑхӑн парӑм обязательствисен виҫи парӑмсен парӑмлах чакнӑ – 9,8 млрд тенкӗ ытларах. Ҫулталӑк каяллахипе танлаштарсан ҫак кӑтарту 3,7% чакнӑ. Светлана Александровна тупӑшсен калӑпӑшӗ кризис умӗнхи тапхӑртинчен 1,5-2 хут пысӑкланнине кӑмӑллӑн палӑртрӗ. Тӗрӗссипе, хамӑрӑн тупӑшсен ӳсӗмӗн хӑвӑртлӑхӗпе эпир малтисен шутӗнче-мӗн.

Экономика аталанӑвӗн министрӗ Владимир Аврелькин тунӑ ҫумдоклад республикӑри ларутӑрӑва уҫӑмлӑрах тума пулӑшрӗ. Вӑл палӑртнӑ тӑрӑх – 2013 ҫулшӑн ырӑ туртӑмсемпе пӗрлех япӑххисем те кӑтартуллӑ пулнӑ. Ҫапах ытларах отрасль ӳсӗм ҫулӗ ҫинче пулни аван.

Шел те, промышленноҫ производствин индексӗ пӗлтӗр 98,6% кӑна пулнӑ. Ҫакна Владимир Александрович кунта туса кӑларакан продукци сутӑнас енӗпе пулнӑ чӑрмавсемпе ҫӑлтавларӗ. Ку чи малтанах йывӑр машиностроение такӑнтарнӑ. Тулашри суту-илӳре те чӑрмавсӑр мар. Тӗпрен илсен импорт чакнӑ. Экспорт вара 9% ӳснӗ иккен.

«Миллиардҫӑ»-предприятисен шучӗ ӳснӗ – 3 теҫеткене ҫитнӗ. Вӗсен шутӗнче – «Элара», «Бреслер», «Экра», «Акконд», «Букет Чувашии», ыттисем. Пӗлтӗр Чӑваш Енри предприятисенче ҫӗнӗ 6 производство хута янӑ. Кӑҫалхи 1-мӗш кварталта промышленноҫ производствин индексӗ ӳснинче ҫакӑн витӗмӗ те пур-тӑр.

Министр кӑҫалхи ӗҫсем ҫине шанӑҫпа пӑхать. Ҫакна чи малтанах «Промтрактор-Вакун» аван ӗҫлесе кайнипе, унччен тӗпрен илсен оборона саккасӗсене пурнӑҫланӑ «Элара» ҫынсем валли продукци ытларах кӑларма пуҫланипе, Ҫӗмӗрлери автофургонсен комбиначӗн темиҫе ҫуллӑх саккассем пуррипе, ытти проектпа ҫӑлтавлать.

Пӗлтӗр ял хуҫалӑхӗ каялла чакнӑччӗ. В.Аврелькин аграрисем те кӑҫал малалла талпӑннине палӑртрӗ, иртнӗ ҫул чакнине кӑҫал саплаштармалла. Хӑш-пӗр район курӑмлӑ ӳсӗмсемпе савӑнтарать те ӗнтӗ. Сӑмахран, Патӑрьелсен ӳсӗмӗ халех пысӑк – 15% шайӗнче.

Министр ӗҫ укҫин кӑтартӑвӗсене те пӗлтерчӗ: пӗлтӗр уйӑхри вӑтам шалу республикӑра 19423 тенкӗпе танлашнӑ – ӳсӗм 13%. Кӑҫалхи 4 уйӑх пӗтӗмлетӗвӗсем тӑрӑх ку виҫе 19487 тенкӗ пулмалла.

Бюджета мӗнле пурнӑҫланине ЧР Тӗрӗслевпе шут палатин председателӗ Татьяна Минина, ПК Эксперт канашӗн председателӗ Владимир Шуверов хакларӗҫ. Пӗтӗмӗшле илсен ырларӗҫ темелле.

Трибуна ҫине вӗсен хыҫҫӑн тухнисен сӑмахӗнче вара сӗнӳсем те янӑрарӗҫ, влаҫ ӗҫлесе ҫитереймен самантсем пирки калани те пулчӗ. Чӑвашпотребсоюз ертӳҫи Валерий Павлов «Правительство граждансен умӗнчи тивӗҫне пурнӑҫланине, экономика малалла туртӑннине» палӑртрӗ. Анчах, унӑн шухӑшӗпе, тӑкаксене виҫеллӗ тумалли хушма мерӑсем кирлӗ, хальлӗхе вара вӗсем хамӑрӑн тупӑшсен ӳсӗмӗнчен пысӑкрах хӑвӑртлӑхпа хӑпарса пыраҫҫӗ. Ҫийӗнчен тӗрӗслев органӗсен ӗҫне виҫеллӗ тума тӑрӑшмалла: «Ҫав органсенче ӗҫлекенсем лайӑх ҫынсем. Анчах бюджета штрафсемпе пуянлатма тӑрӑшни икӗ вӗҫлӗ – ҫав штрафсем ытла та пысӑккине кура вӑл е ку производство хупӑнасси патне илсе ҫитерме те пултараҫҫӗ». В.Павлов ҫавӑн пекех ҫӗре хаклас тӗлӗшпе те улшӑнусем кирли ҫинчен каларӗ, вырӑнти продукцие федераци шайӗнчи суту-илӳ сечӗсене кӑларассипе ҫыхӑннӑ йывӑрлӑхсен темине те ҫӗклерӗ.

«Тароупаковка» АУО ертӳҫи Олег Таланов пирки промышленноҫ представителӗ темелле ӗнтӗ, анчах вӑл ку хутӗнче ял хуҫалӑх ыйтӑвӗсем тавра пӑшӑрханса калаҫрӗ. Тепӗр тесен АПК нуши уншӑн та ют мар – Пӑрачкав районӗнче предприятин хуҫалӑх пур вӗт. Олег Борисович ял хуҫалӑхне пӗлтӗрхи кӑтартусем чакнӑшӑн сивлени вырӑнсӑррине палӑртрӗ: «Ҫанталӑк йӗпе пулчӗ вӗт. Кӗркунне нумайӑшӗ кӗрхи культурӑсене акса хӑвараймарӗ. Эпир те акаймарӑмӑр – уйра шурлӑхчӗ, тракторсем путса лараҫҫӗ...» Ҫав вӑхӑтрах патшалӑх, унӑн шухӑшӗпе, ял хуҫалӑхӗ тӗлӗшпе питӗ тимлӗ теейӗмӗн. Хресчен малтан темиҫе уйӑх тӑкакланать, тупӑшӗ вара ҫулталӑк вӗҫӗнче кӑна кӗрет. Патшалӑхӑн ҫакна шута илмелле пек ӗнтӗ, анчах вӑл та тивӗҫлӗ субсидисене ҫулталӑк вӗҫӗнче кӑна парать. Е – тата та каярах, тепӗр ҫул пуҫламӑшӗнче тин.

О.Таланов ялта ӗҫлекенсем ҫителӗксӗрри пирки те пӑшӑрханса калаҫрӗ: «Агрономсем, зоотехниксем, ветеринарсем ҫитмеҫҫӗ. Аслӑрах ӑрурисем ӗҫлеҫҫӗ-ха, вӗсем кайсан вара мӗн курӑпӑр? Хамӑрӑн ял хуҫалӑх академийӗ специалистсене хатӗрлет, анчах ӑна пӗтерекенсенчен яла каякан сайра. Вӑрнарти ветеринари техникумӗнче вӗренекенсемпе курнӑҫрӑм. Вӗренсе пӗтерсен хулана йытӑсемпе кушаксене сиплеме каятпӑр теҫҫӗ...»

«СР» партин парламентри фракцийӗн лидерӗ Игорь Моляков бюджета пурнӑҫлас тӗлӗшпе коррупци пысӑк чӑрмав пулса тӑни пирки калаҫу пуҫарчӗ. Ку хутӗнче вӑрман хуҫалӑхӗнчи йӗркесӗрлӗх тӗслӗхӗсемпе паллаштарчӗ. Ҫав тӗслӗхсемпе темиҫе уголовлӑ ӗҫ пуҫарнӑ-мӗн. Депутат пӗлтернӗ тӑрӑх – сиен 300 млн тенкӗ патнеллех-мӗн. «Вӑрланӑ вӑрман калӑпӑшӗ – 6,5 пин вакун!» – тесе пӗлтерчӗ-ха, анчах ҫак цифра тӗлӗшпе хӑй те иккӗленнӗн туйӑнчӗ. Юрӗ, уголовлӑ ӗҫсене тӗпчесе пӗтерессе кӗтер.

Ҫӗнӗ Шупашкар мэрне Александр Сироткина вара хӑйӗн хулин нушисем пӑшӑрхантараҫҫӗ. Сӑмахран, химиксен хулинче ҫӗнӗ шкулсем кирлӗ. Юлашкине унта 17 ҫул каялла ҫӗкленӗ – унтанпа урӑх туман. Ҫулсене юсас, ҫӗннисене тӑвас ыйтусем те ҫивӗч. Ку енӗпе Ҫӗнӗ Шупашкар влаҫӗсен Шупашкар тӗлӗшпе ӳпкев те пур: «Ҫулсем валли Шупашкара пирӗннинчен 12 хут пысӑкрах укҫа пама палӑртнӑ...» Ҫулсем тенӗрен, укҫа ытти район-хулана та пӑсмӗ. Тӗслӗхрен, Елчӗксен представителӗ, халӑх итлевӗнче сӑмах илнӗскер, 23 км тӑсӑлакан Елчӗк-Курнавӑш ҫула юсама вӑхӑт ҫитнине палӑртрӗ. Вӑл – районӑн, анчах ҫавӑн тӑршшӗскере юсама Елчӗксем хӑйсем кӑна вӑй ҫитерейменни куҫ кӗрет.

Итлеве хутшӑннисем Патшалӑх Канашне бюджета пурнӑҫлани ҫинчен тунӑ отчета ҫирӗплетмешкӗн сӗнме йышӑнчӗҫ. Министрсен Кабинечӗ, вырӑнти хӑй тытӑмлӑх органӗсем валли те сӗнӳсем палӑртрӗҫ: вӗсем бюджет укҫипе тирпейлӗ те тухӑҫлӑ усӑ курассине тивӗҫтерес тӗллевлӗ.

■ **Николай КОНОВАЛОВ**

*Ял хуҫалӑхӗ*

# Ҫур акине ӑнӑҫлӑ вӗҫленӗ

***Шупашкар районӗнчи «Ольдеевская» агрофирма ҫур акине вӗҫлерӗ. Эпир пынӑ кун Шӗнерпуҫ ял тӑрӑхӗнчи Ҫырмапуҫ ялӗ ҫумӗнчи уйра тракторсем юлашки лаптӑка куккурус вӑрлӑхӗ варӑнтаратчӗҫ.***



***●А.Беликов гендиректор акаҫӑсен ӗҫӗпе кӑмӑллӑ.***

«Ӗнесемшӗн ҫак культура питӗ паха, – терӗ акционерсен хупӑ обществин Хыркасси ялӗнчи пиллӗкмӗш уйрӑмӗн ертӳҫи Фаина Борисова. – Кӑҫал 139 гектар акрӑмӑр. Ешӗл ҫулҫитунишӗн мар – тӗшшишӗн. Вӑл – тултӑхлӑ апат. Куккуруса комбайнпа тӗшӗлетпӗр. Тӑпрана Николай Федоров тракторист кӑпкалатрӗ, Владимир Лаврентьевпа Виталий Иванов механизаторсем акнӑ хыҫҫӑн Сергей Устимов агрегачӗ пусӑрӑнтарчӗ».

Акӑ ана хӗррине тулли автомашина пырса чарӑнчӗ. Водителӗ – Елена Егорова. Василий Алексеевпа Маргарита Потапенко рабочисем кузова уҫрӗҫ те михӗри удобренипе вӑрлӑха сеялкӑна тултарчӗҫ. Часах «Беларуҫ» вырӑнтан хускалчӗ.

«Ольдеевская» ял тӑрӑхӗнчи 1238 гектар ҫӗрпе усӑ курать, – пӗлтерчӗ Фаина Валентиновна. – Ҫав шутра – нумай ҫул ҫитӗнекен курӑк – 524, урпа – 339, сӗлӗ – 46, пӗр ҫул ӳсекен курӑк – 74 гектар, ытти культура. Пӗтӗмпех выльӑх апачӗ хатӗрлеме кайӗ. Пӗр центнер тырӑ та сутмастпӑр».

«360 ӗне усратпӑр. Кашни ӗнерен вӑтамран 22,5 килограмм сӗт сӑватпӑр, – терӗ обществӑн директорсен канашӗн председателӗ Евгения Беликова. – Чи пахине ҫеҫ сутатпӑр. Апата сӗт ытларах антарма пулӑшакан тутлӑхлӑ япаласем хушатпӑр. Пӗлтӗр кашни ӗнерен вӑтамран 7200 килограмм сӗт сунӑ».

Ӗнесене Александр Хураськин, Николай Егоров, Снежанна Федорова, Валентина Васильева операторсем сӑваҫҫӗ. Майя Гурьева, Роза Сергеева, Маргарита Александрова пӑру пӑхаҫҫӗ. Елена Игнатьева пушмак тынаран ӗне туса парса операторсене савӑнтарать. Фермӑпа уй-хирте 30 яхӑн ҫын тӑрӑшать.



***●Ф.Борисова ӗҫ йӗркелӳҫи М.Потапенкӑпа В.Алексеев вӑрлӑх тултарнипе кӑсӑкланать.***

«Ҫурхисене кирлӗ чухлӗ акрӑмӑр. Удобрени чылай хывråмӑр, – калаҫӑва пӗтӗмлетрӗ обществӑн генеральнӑй директорӗ Андрей Беликов. – Ӳсен-тӑран ҫитӗннӗ уйӑхсенче кашни эрнерех ҫумӑр кӗтӗпӗр. Ҫум курӑкран вӑхӑтра тасатӑпӑр, ял хуҫалӑх культурисене сӑтӑр тӑвакан хурткӑпшанкӑран хӳтӗлӗпӗр».

■ **Юрий МИХАЙЛОВ**



***●В.Иванов «Агро-Союз» агрегата пӑхма кабинӑран тухрӗ.***

Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сӑн ӳкерчӗкӗсем



# ВЫРĂНТИ ХĂЙ ТЫТĂМЛĂХ

**Ятарлă кăларăм**

*Çыру йĕрĕпе*

# «Халăх хăй хутшăннă ĕçе ытларах хаклать»

***Елчĕк районĕнчи Кĕçĕн Таяпа ял тăрăхне 6 ял кĕрет, 1865 çын пурăнать. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Валерий Петров, ку должноçа суйлав пĕтĕмлетĕвĕсемпе 2012 çулта йышăннăскер, халăх пурнăçне лайăхлатас тата çăмăллатас тесе нумай тăрăшать. Ертӳçĕ çакнашкал ĕçсене вырăнти çынсене хăйсене те явăçтарма ăнтăлать.***



Акă 2013 çулта Таяпа Энтри ялĕнчи Арманкас урамне вак чул сарса хытарнă, ятарлă программăпа усă курнă. Шел, бюджет укçи ĕçе вĕçлемешкĕн çитеймен. Урам вĕçне хытармасăр хăварас темен, халăхпа пуху ирттернĕ. Çынсем çав урамри 20 килтен 2-шер пин тенкĕ пуçтарма йышăннă. 1 хуçалăх ку ĕçе хутшăнма килĕшмен, паллах, вĕсене никам та ирĕксĕрлемен. «Укçа-тенкĕ пухас енĕпе ял старости Владимир Чудаков асли пулчĕ, ăна Иван Морозов депутат пулăшса пычĕ. Укçа хывнисене пурне те квитанци патăмăр. Ку нухратпа стройматериал туянтăмăр. Çул тăвакан организаци юлнă лаптăкшăн укçа илмерĕ, эпир ыйтнипе çеç ĕçе вĕçлеме килĕшрĕ. Унсăрăн техника ăçтан тупăттăмăр? Тепĕр самант: пĕр-пĕр çĕрте çул тусан çав адреспа вăхăт самаях иртмесĕр те тепĕр хут çаврăнса çитейместпĕр. Эпир никама та кӳренмелле ан пултăр тесе кашни çул пĕрер ялта çул тăвăпăр-юсăпăр тесе йышăнтăмăр. Таяпа Энтринчи урама пĕлтĕр вак чул сартăмăр, тепĕр 3 çул иртмесĕр унта ку енĕпе ĕçлейĕмĕпĕр. Эпир сарман /грунт/ çулсене юсамалли программăна пăхăнса /софинансировани мелĕпе/ ĕçлетпĕр. Ял тăрăхĕ çак тĕллевпе 150 пин тенкĕ уйăрчĕ тĕк – патшалăх тепĕр 250 пин тенкĕ хушса парать. Çавăнпа асăннă тĕллев валли кашни çулах нухрат тупма тăрăшатпăр, урамсенчи юхăнса кайнă вырăнсене чи малтан юсатпăр», – каласа кăтартать Валерий Владимирович.

Çак калаçăва ахальтен хускатмарăмăр. Хăшĕсем çул тумашкăн халăхран укçа пуçтарнăшăн кăмăлсăр иккен. «Хыпар» хаçат редакцине те çавăн пирки пĕлтерсе çыру çитрĕ. Чăн та, авторĕсем хăйсен ят-шывне палăртман, «Кĕçĕн Таяпа ял тăрăхĕнчи çынсем» тенипех çырлахнă. Маларах асăнтăмăр ĕнтĕ, укçине çынсем хăйсен ирĕкĕпе панă, вĕсем çакна çирĕплетсе ятарлă журнала алă пуснă, квитанци илнĕ. Кăмăл çуккисем ку ĕçе хутшăнман. «Чылай çĕрте çак меслетпе усă кураççĕ. Пирĕн районти Аслă Елчĕкре, тĕслĕхрен, 5 çул çапла ĕçлеççĕ ĕнтĕ: çул сарма укçа çитмесен халăхран пуçтараççĕ. Вĕсем халĕ урамра тротуарсем тума пуçланă. Пысăк ĕçе патшалăх та, ял тăрăхĕ те, вырăнти граждансем те хутшăнни аван. Çынсем хăйсем хутшăннипе пурнăçланă ĕçе ытларах хаклаççĕ, хăйсен укçипе тунă çула ватса-çĕмĕрсе пĕтерме тăрăшмаççĕ, – калаçăва тăсать Валерий Петров. – Таяпа Энтринчех масар патне каймалли урамра çуркуннепе кĕркунне пылчăк çăрăлать, унта кĕрсе тухма та май çук. Хĕлле хырса-тасатса тăратпăр-ха ăна. Ку çула хытă сийлĕ тăвас тесе ятарлă нихăш программăна та хутшăнаймастпăр, çавăнпа ял пухăвĕнче çынсем хăйсен ирĕкĕпе кашни килтен 1 пиншер тенкĕ пуçтарма калаçса татăлчĕç, ку енĕпе икĕ уполномоченнăя суйларĕç. Укçа паракансем ведомоçа алă пусаççĕ, квитанци илеççĕ. Пĕлтĕр çулталăк вĕçĕнче 60 пинлĕх стройматериал туянтăмăр. Масар патне каймалли çула кăçал кĕске вăхăтрах сарса пĕтерес тетпĕр».

Пĕлтĕрех «Комсомольски-Елчĕк»-Кĕçĕн Таяпа» автоçула, юхăннăскерне, тĕпрен юсаса асфальт сарас ĕçе пуçăннă. 4,11 км тăршшĕскерне 2 çулта çĕнетсе пĕтермелле, çакăн валли 57 млн тенкĕ кирлĕ, укçине федераци бюджетĕнчен те уйăрнă. Автоçул сарлакăшне те пысăклатасшăн: 4,5 метртан 6 метра çитересшĕн – автобус маршрутĕ уçмашкăн çакăнтан кая мар кирлĕ. Яка çул Кĕçĕн Таяпара тĕпленнисемшĕн çеç мар, çывăхри Каркалар, Петровка, Кĕçĕн Патреккел ялĕсенче пурăнакансемшĕн те меллĕ пулĕ. Автобус çӳреме пуçласан вĕсем те кирлĕ çĕре хăвăртрах çитĕç. Çăмăл машина, ытти техника хуçисем те савăнĕç паллах.

Çӳлерех асăннă çыру авторĕсем сулăм укçи пама, пушар хуралне тытса тăнăшăн çулталăкра 200 тенкĕ тӳлеме тивнĕшĕн те кăмăлсăр. Çакна палăртмалла: сулăм укçине /самообложение/ ытти ял тăрăхĕнче те пуçтараççĕ. Кĕçĕн Таяпа ял тăрăхĕнче вăл 100 тенкĕ, юлашки 5 çулта ăна пĕрре те ӳстермен. «Ку укçана граждансен пухăвĕн йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн пуçтаратпăр. Асăннă кĕмĕлпе йăлари хытă каяша, çӳп-çапа свалкăна турттарса тухма усă куратпăр. Çак енĕпе район центрĕнчи ЖКХ предприятийĕпе килĕшӳ тунă. Пĕлтĕр сулăм укçи 50400 тенкĕ пухăнчĕ. Çав шутран 45 пинĕ çӳп-çап турттармашкăн кайрĕ. 3 пин тенкĕпе Таяпа Энтринчи вылăх масарне, 2 пин тенкĕпе Кĕçĕн Таяпари кĕпере юсамашкăн усă куртăмăр. Урамри çутă хунарĕсене туянмашкăн 400 тенкĕ тăкакларăмăр», – ăнлантарать ял тăрăхĕн пуçлăхĕ. Паллах, халăх укçипе мĕн тĕллевпе усă курни пирки вăл çулталăк пуçламăшĕнче йĕркелекен граждансен пухăвĕнче отчет тунă вăхăтра та тĕплĕн каласа панă.

Кĕçĕн Таяпа ял тăрăхĕ ирĕклĕ пушар хуралне тытса тăрать. Колхоз саланнă хыççăн вăл ял тăрăхĕн шутланать. Депо та пур, унти 2 специалист икĕ пушар машинипе инкек вырăнне туххăмрах çитме хатĕр. Ирĕклĕ пушарнăйсене патшалăх укçа тӳлемест, ял тăрăхĕ уйăхсерен 4,5 пиншер тенкĕ шалу парать. Унсăр пуçне машинăсем валли саппас пайсем, çунтармалли-сĕрмелли материал туянмалла, депора çутă çутнăшăн та тӳлемелле... Ирĕклĕ пушар хуралĕ валли халăхран пĕлтĕр пĕтĕмпе 104 пин ытла тенкĕ пухнă, ку нухратпа пĕтĕм тăкака саплаштармалла. Паллах, ытти чылай çĕрти пек колхоз саланнă тесе пушар хуралне пĕтерме те пулать, çапах вăл пурри ял çыннисемшĕнех лайăх-çке. Вуткăвар кирек камăн килĕнче те алхасма, 200 тенкĕлĕх /çулталăкра кашни килтен шăп çавăн чухлĕ пуçтараççĕ/ çеç мар, 200-300 пин тенкĕлĕх тăкак кӳме пултарать. Этем пурнăçĕн хакне вара нимĕнле виçепе те палăртаймăн. Ирĕклĕ пушар хуралĕ юнашарах тăк вăл вут-кăвара малтанхи тапхăртах лăплантарать, ăна вăй илсе алхасма памасть. Валерий Петров унти специалистсем опытлă пулнине палăртрĕ. Акă Вениамин Сергеев колхозра хăрушсăрлăх техники енĕпе ĕçлекен инженер пулнă, халĕ – ирĕклĕ пушарнăй. «Питĕ шанчăклă çын, ыттисене кирек хăш вăхăтра та пулăшма хатĕр», – терĕ ун пирки Валерий Владимирович.

Материала пичете хатĕрленĕ вăхăтра савăнăçлă хыпар пĕлтĕмĕр: Вениамин Сергеева служба тивĕçĕсене тӳрĕ кăмăлпа пурнăçланăшăн Раççей МЧСĕн «Василий Чуйков маршал» асăну медалĕпе наградăланă. Апла тăк Кĕçĕн Таяпа ял тăрăхĕнче пурăнакансен хăйсен территорийĕнче ирĕклĕ пушар хуралĕ пурришĕн, унта чăн-чăн ăстасем тăрăшнăшăн хĕпĕртемелле.

«Хытă сийлĕ çулсем туни те, пушар хуралне тытса тăни те – йăлтах пирĕншĕн, ял çыннисемшĕн вĕт. Пурнăç условийĕсене лайăхлатасси пирĕнтен хамăртан та килет. Акă Кĕçĕн Таяпа ялĕнче масар патне каймалли çул та йĕпе-сапа çанталăкра çăрăлать, машинăпа кĕме çук. Эпир шăпах çав урамра пурăнатпăр. Ăна чул сармашкăн бюджет укçи çитмесен эпир çакăн валли хамăр та кĕмĕл пуçтарма хирĕç мар. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Валерий Петров халăх пурнăçне май килнĕ таран лайăхлатма тăрăшать. Тĕслĕхрен, унăн пуçарăвĕпе Кĕçĕн Патреккел ялĕнче çăл куçа хăтлăлатрĕç, юнашарах шыва кĕмелли вырăн турĕç», – шухăшне пĕлтерчĕ Кĕçĕн Таяпа ялĕнче пурăнакан Алина Витальевна Петрова.

Ырă тепĕр ĕç пирки те асăнса хăварар. Каркаларта пĕве е кӳлĕ çукки тĕрлĕ йывăрлăх кăларса тăратнă. Ял сывăхĕнче Çарăмсан шывĕ юхать-ха, анчах çуллахи вăхăтра вăл та типсе ларать. Çакна шута илсех ял тăрăхĕн администрацийĕ Андрей Севриковпа, хресчен /фермер/ хуçалăхĕн ертӳçипе, унта пĕлтĕр плотина тума пуçланă. 2013 çултах çуртсене пĕр çĕререх компактлăн лартассипе çыхăннă конкурсра çĕнтерсе Таяпа Энтри ялĕнчи культура çуртĕнче 1 млн тенкĕлĕх тĕплĕ юсав иртерме май килнĕ. Кăçал Кĕçĕн Таяпара çĕнĕ фельдшер-акушер пункчĕ тăвас енĕпе документсем хатĕрлеме пуçланă, кивви ытла юхăнса кайнă, çавăнпа халхи вăхăт ыйтнине тивĕçтерекенни кирлех. Унсăр пуçне территорисене тирпей-илем кĕртес, хăтлăлатас енĕпе те малалла ĕçлесшĕн. Ял тăрăхĕн администрацийĕ халăх пуçарăвĕсене çул пама, вĕсен ĕмĕт-тĕллевне пурнăçа кĕртмешкĕн пулăшма яланах хатĕр.

■ **Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА**

● ➡ 6,11,12 стр.

ВЫРĂНТИ ХĂЙ ТЫТĂМЛĂХ

*Çивĕч ыйту*

# Шантарнипе ăнтару пулмĕ

***Ялăн социаллă пурнăçне çĕнетес енĕпе тумалли ĕçсен ытларах пайне унччен пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен вăйĕпе пурнăçланă. Ку числă тивĕçе чăннипех тĕллевлĕ ĕçпе çирĕплетсе пынă ял-поселоксенче: пурăнмалли çуртсем, производство объекчĕсем, шкулсем, ача сачĕсем, медицина учрежденийĕсем, клубсем, лавккасем, асфальт çарнă çулсем тунă.***

Паян вара мĕн пур йывăр çĕклем вырăнти влаç, урăхла каласан, хăй тытăмлăх органĕ çине тиенет. Ял тăрăхĕн администрацийĕ вырнаçнă çурта хăйсене канăç паман ыйтусемпе кашни кунах çын йышлăн кĕрсе тухать. Кунта тăрăшакансем вĕсен хуйхи-суйхине итлессе шанаççĕ. Анчах юмахра кăна ылтăн пулă мĕн шантарнине кĕтсе илме пулать. Чăннипе – пачах урăхла ӳкерчĕк.

Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен çыннисене хĕрхенесшеллес килсе каять тепĕр чухне. Алли-урисем пĕтĕмпех çыхланса ларнине пăхмасăрах, пĕр харăс темиçе ĕç пурнăçлама тивет.

Укçа-тенкĕ ыйтăвĕ çивĕч. Нухратсăр пĕр утăм та тăваймăн паян. Унччен кал-кал ĕçленĕ пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем, промышленноç предприятийĕсем вырăнти бюджета пуянлатма тивĕçлĕ тӳпе хывнă. Халĕ вĕсем те аран-аран сывлаççĕ. Кунашкал лару-тăрура уйрăм çынсем тытакан предприятисем çине тилмĕрсе пăхни те кăлăхах. Пĕтĕм тарăхăва ирĕксĕрех вырăнти влаç çине янипе те уссине кĕтсе илеймĕн.

Пытармăпăр, ял тăрăхĕсен администрацийĕсене паян çӳлтен «анакан» çĕнĕ саккунсемпе хушусен тата йышăнусен пуххине пĕрин хыççăн теприне пурнăçа кĕртме тивет. Анчах вĕсенче те вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен ĕçне-хĕлне тĕрĕс-тĕкел йĕркелеме, çукран пур тума пулăшакан уçăмлă çул-йĕре палăртман-çке. Ăна-кăна пурнăçлама тăрсан пуçлăхсене «ырă куккасем» алă тăсса парасса шанса кĕлмĕçленме лекет. «Мĕнле влаç вăл, алă тăсса тăрать пулсан? – тет Йĕпреç хула тăрăхĕн администрацийĕн пуçлăхĕ Вячеслав Анисимов. – Пушă енчĕклĕ пуçлăхран мĕн кĕтмелле? Шантарнипе ăнтару тăваймăн. Вырăнти влаç çыннин полномочийĕсемпе тивĕçĕсем çав тери нумай-çке. Мĕнле кăна ыйту татса памалла мар вĕсен. Иккĕн йывăр лава тапса туртма çăмăлтарах тесе, иртнĕ ĕмĕрĕн 80-90-мĕш çулĕсенчи пек, пулăшу ыйтма ял хуçалăх предприятийĕсен пуçлăхĕсем патне каяймăпăр. Йĕпреç хула тăрăхĕн администрацийĕ унччен «Знамя» колхозпа тачă çыхăнса ĕçленĕ. Вăл панкрута тухса саланса кайнă хыççăн эпир «çурăк валашка» умĕнче тăрса юлтăмăр мар-и?..»

Вырăнти влаçăн шанчăклă тĕрекĕ – агропромышленноç комплексĕн предприятийĕсенчен ытларахăшĕ – халькхи лару-тăрура çыхăнса ларнăпа пĕрех. Вĕсен хушшинчи çыхăну çирĕп пулмасан палăрăмлă улшăну çинчен калаçу хускатни те тĕлсĕр. Çапах та çыхăну çĕнĕрен вăй илме тытăннине палăртмаллах. Юлашки 3-4 çулта Йĕпреç тăрăхĕнчи вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе хуçалăхсен правленийĕсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлеме пуçлани икĕ еншĕн те усăллă пулнине çирĕплетекен тĕслĕх пайтах. Акă Пучинке, Кĕлĕмкасси, Пăкăян, Хурамал, Пысăк Упакасси ял тăрăхĕсенче вырнаçнă «Красный партизан», «Красный фронтовик», Киров ячĕллĕ колхозсемпе «Патман» ял хуçалăх кооперативĕ тата «Трудовик», «Путиловка» агрофирмăсем ăнăçлă аталанса пынин тĕп сăлтавĕ шăпах çакăнпа çыхăннă та. Асăннă ял тăрăхĕсен администрацийĕсем те укçа-тенкĕ тупмалли, пуçтарăнса кайнă ыйтусене вăраха ямасăр татса памалли çул-йĕре аграри тытăмĕн предприятийĕсемпе пĕрле палăртаççĕ.

Çӳлерех илсе кăтартнă тĕслĕх патне тепĕр хут таврăнăпăр. Тĕрĕссипе, вырăнти влаçпа хуçалăхсен хушшинчи çыхăну чылай çĕрте çукпа пĕрех. Çавна курма-асăрхама снайпер пек çивĕч куçлă пулни кирлĕ те мар, вăл е ку тăрăхра вырнаçнă пĕр-пĕр ял çывăхне çитсе тухмалли кăна. Вăл ял çыннисене уйăрса панă çĕр пайĕсемпе усă курасси мĕнле шайра пулнинченех уçăмлăн курăнать. Çавăн пек лаптăксене чылай вырăнта тахçанах çум курăк пусса илнĕ. Пуçлăхсем те кăсăкланма пăрахнă вĕсемпе, харпăрлăхçăсем те алă сулнă. Хуçалăхсен ертӳçисемпе тĕрлĕ шайри пуçлăхсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесе пынă çĕрте ял çыннисене хăйсен çĕр пайĕсене йĕркелесе-тирпейлесе тăма аграри тытăмĕн предприятийĕсем хăйсем витĕмлĕ пулăшу параççĕ. Çапла пулмалла та. Мĕншĕн тесен ялта пурăнакансенчен ытларахăшĕн кĕреçе-сенĕксĕр пуçне урăх нимĕнле техника та çук.

Паянхи ял тӳссе ирттерекен йывăр тапхăр хăвăртрах хыçа юлтăр тесен, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе хуçалăхсен правленийĕсем тытакан çыхăну пĕлтерĕшĕпе витĕмне тĕрĕс хак памалла кăна...

■ **Геннадий КУЗНЕЦОВ**

*Ял пурнăçĕ*

# Ĕмĕтпе пурăнакан халсăр мар

***Ясная Поляна поселокĕнче виçĕ çул каялла пулнăччĕ. Хальхинче те Апрушнайсем унчченхиллех мал ĕмĕтпе пурăнни хăпартлантарчĕ. 25 хуçалăхлă ялта паян вун çичĕ çемье çеç хĕл каçать. Çапах та кунта хăйне евĕр пурнăç, йăла-мешехе, çĕнĕлĕх пулнине тепĕр хут ĕненерчĕ ял старости Г.Федоров.***

Пирĕн районта 56 ялтан кашнин патнех – асфальт çул. Апрушнайсем те хăйсем пурăнакан вырăна çĕнетессипе, ăна кирлĕ пек пăхса тăрассипе ыттисенчен кая мар. Чылайăшĕ хăй тĕллĕнех шыв та кĕртнĕ, канализаци те тунă. Пӳртре çăвăнмалли хатĕр вырнаçтарнисем те пур.

– Ĕмĕтпе пурăнакан çын халсăр мар. Пирĕн ялсем хăйсене çак ушкăна кĕртеççĕ те. Темиçе çул каялла пĕчĕк ялта часавай пулассине шухăшлама та пултарайман эпир, халĕ вара ку ыйтупа та пăр тапранчĕ, – калаçăва тăсрĕ Геннадий Павлович. Кĕлĕ çурчĕ пулмалли вырăна ял тăрăхĕпе килĕшсеканашласа суйласа илнĕ. Темиçе уйăхранах ялти клуб çывăхĕнче Христос йăли-йĕркине тытса пымалли тăпăлкка чиркӳ усăлĕ. Ырă тĕллеве пурнăçа кĕртме авăрланнисем ялтанах: Олег Хмелев, Владимирпа Виталий Симуковсем, Петр Васильев... Паянхи куна унăн проектне туса хатĕрленĕ, çак кунсенчех сакăр кĕтеслĕ йывăç пурана никĕс çине вырнаçтарасшăн.

– Кĕлĕ тăвакана, ыйтакана турă пулăшатех. Ял-йышăмпа пĕр шухăшлă пулса тăрăшсан, тен, пирĕн Апрушнайне те «кăвак çулăм» çитĕ... – ĕмĕтне пытармарĕ ял старостин мăшăрĕ Р.Федорова.

Ĕлĕк Апрушнай пек пĕчĕк ялсене туя кайсан такмак ăстисем вырăнти халăха йĕплесе илмелли сăмахсене шыраса тупнах: «Ялĕ пĕчĕк, каччă сахал – тухса тарассăм килет...» тенисене паян та ас тăватăп. Халĕ çак йĕркесем вĕсемшĕн кивелнĕ тесшĕн. Пĕр тăван пек туслă пурăнакан çăтмахри евĕр вырăна айккинчен куç хывакан пайтах. Юлашки виçĕ çулта çеç çак яла ултă çемье куçса килнĕ. Çурт сутас текенсем çук. Кăçал вара чăвашсемпе тăванлашма тутар çемйи те тĕпленнĕ. Нăрваш Шăхаль ял тăрăхне кĕрекен çак ялта ĕлĕкех ĕçчен те маттур, пултаруллă çынсем пурăннă. Çакскерсем вăхăтĕнче хурăнтан тикĕт, йывăç тымарĕсенчен кăмрăк хатĕрленĕ. Вăрманта сухăр юхтарнă, йĕлке хурчĕ тытнă. Вăрçăччен кирпĕч те çапнă. Ĕçчен çынна вара ял савать çеç мар, хапăл та тăвать. Тăрăшакан пурнăç тунине вĕсем яла нумай пулмасть Карапай Шăмăршăран куçса килнĕ Софроновсем килсен тепĕр хут курса ĕненнĕ. Чăн малтанах Анютăпа Олег ваттисенчен юлнă çурта керменкке пекех хăтланă, хуралтисене те çĕнетнĕ. Иккĕшĕ те алă ăсти. Ку тараннччен ялта кăçатă тăвакан та, чăваш кĕпи-тумтирне ытармалла çĕлекен те тупăнман. Çур ĕмĕр урлă касnă çĕнĕ çынсем ял халăхĕн шанăçне, хисепне тӳрех хăйсен ылтăн аллисемпе çĕнсе илнĕ. Çĕнĕ ремеслана кил хуçине мăшăрĕ хăнăхтарнă. Çĕрпӳ район хĕрĕшĕн вăл ĕç ют пулман. Хĕрарăм çĕвĕ машини умне ларни вара чĕрĕк ĕмĕр ытла та иккен. Çĕвĕç Анюта тесен ăна паян кӳршĕ районсенче те лайăх пĕлеççĕ.

Культура çуртлакĕнче ял çыннисем концертсемпе тĕрлĕ тĕл пулура çеç савăнасшăн мар. Кашни çын хăйĕн чунне тасаттăр, хăйшĕн тата ял малашлăхĕшĕн ырă ĕç тутăр тесе тăрăшаççĕ. Çу пуçланас умĕн ял хуçипе-старостипе пĕрле вĕсем темиçе хутчен те субботник ирттерме ĕлкĕрнĕ, ял масарне тасатнă. Сăвăплă вырăн вĕсен нихăçан та хыт хура айне пулмасть. «Ĕмĕрлĕх тĕнчене куçмалли «ялăмăра» асăмран кăлармалла мар, ăна эпир унччен те тимлĕхрен çухатман»,– калаçăва хутшăнчĕ ялти чи ватă кинемей З.Николаева. Çинук аппан пĕрле пуç шуратнă мăшăрĕ çĕре кĕнĕ пулин те 86 çулти тыл хастарĕ кил-тĕрешне тирпейлĕх тытать-ха. Ват çын тирпейлĕ пулни вара хăй ял илемĕ.



● *Ял старости Николай Айкин тата Нăрваш Шăхаль ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Геннадий Федоров.*

■ **Альбина ЕГОРОВА.**

Патăрьел районĕ.

Автор сăн ӳкерчĕкĕ

*Ырă хыпарсем*

## Депутат – вĕрентекен те

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн пĕрремĕш суйлаври депутачĕсем парламентăн пĕрремĕш сессине пухăннăранпа кăçалхи çĕртме уйăхĕн 21-мĕшĕнче 20 çул çитет. Апла тăк саккун çыракан влаç органĕн – сумлă юбилей. Депутатсем ăна числăн кĕтсе илме хатĕрленсе çулталак пуçламăшĕнчех республикăри вăтам професси тата пĕтĕмĕшле вăтам пĕлӳ паракан вĕренӳ учрежденийĕсенче усă уроксемпе класс сехечĕсем ирттерме, Чăваш парламенчĕн историйĕпе тата хальхи ĕç-хĕлĕпе тĕплĕн паллаштарма тытăннă.

Висĕм кун Валерий Филимонов депутат Шупашкарти экономика-техника колледжĕнче «Чăваш Ен Патшалăх Канашĕ – 20 çулта» темăпа усă урок ирттернĕ, чылай ыйтăва хуравланă. Олег Николаев депутат Санкт-Петербургри патшалăх инженери-экономика университечĕн республикăн тĕп хулинчи филиалĕн студенчĕсемпе тĕл пулнă, саккунсене мĕнле хатĕрленипе тата йышăннипе, комитетсен ĕç-хĕлĕпе паллаштарнă. Кун евĕрлĕ мероприятисем шкулсемпе колледжсенче вĕренӳ çулĕ вĕçленичченех тăсăлĕç.

Сăмах май, парламентарисем унччен те классемпе аудиторисенче пулнă, Раççей Федерацийĕн Конституцине йышăннăранпа 20 çул çитнине числанă тапхăрта лекцисем вуланă, усă уроксемпе ирттернĕ.

## Хăйсен ыйтăвĕсемпе

Чăваш Ен Патшалăх Канашĕн Социаллă политика тата наци ыйтăвĕсемпе ĕçлекен комитечĕн ертӳçин çумĕ Игорь Кушев «Пĕрлĕхлĕ Раççей» политика партийĕн регионти йышăну пӳлĕмĕнче çынсене хăйсен ыйтăвĕсемпе йышăннă. Депутатран пулăшу ыйтма çав кун 7 çын килнĕ. Вăрмар поселокĕнчи Л.Петровăна, акă, сакăр çемье пурăнакан, 1953 çулта тунă пĕр хутлă çурта юрăхсăррисен шутне, унти çынсене хăтлă хваттерсене куçармалли программăна кĕртменни пăшăрхантарать. Пенсионерка пĕлтернĕ тăрăх – урай-мачча хăмисем çĕрнĕ, çурта тăтăш юсама, тăкакланма тивет. Ыйтăва уçăмлатма республикăн Строительство министерстви пулăшĕ.

Украинăри çивĕчленнĕ лару-тăрăва пула Донецк облаçĕнчи Новоазовск хулинчи Е.Куповыхăн ачипе пĕрле Чăваш Енри тăванĕсем патне ирĕксĕр куçса килме тивнĕ. Мăшăрĕ хулана хӳтĕлекенсен ретĕнче пулнăран çемьене вĕлерессипе хăратма пуçланă. Куçса килме тивнĕ хĕрарăм хăйне пурăнмалли кĕтеспе тата ĕçпе тивĕçтерме ыйтнă. И.Кушев депутат çийĕнчех Комсомольски район администрацийĕн ертӳлĕхĕпе телефонпа çыхăннă, май тупса пулăшма сĕннĕ. Районтисем хĕрарăмпа унăн ачине йывăрлăхра пăрахмасса шантарнă.

■ **Ю.ПЕТРОВ**

● ➡11, 12 стр.

# "Саккунсене чĕре витĕр кăларса йышăнатпăр"



Олег МАЛЬЦЕВПА Ольга ПАНОВА сăн ӳкерчĕкĕсем.

## ЮРИЙ АЛЕКСЕЕВИЧ ПОПОВ

**1961 çулхи чӳк уйăхĕн 2-мĕшĕнче Елчĕк районĕнчи Лаш Таяпа ялĕнче çуралнă. Шупашкарти строительство техникумĕнче, Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕнче вĕреннĕ, Совет Çарĕнче пулнă.**

**Шупашкарти «Спецстроймеханизацинче», Елчĕк районĕнчи «Слава» колхозра, Кӳкеçри райпо правленийĕн председателĕн çумĕнче, «Сделай Сам» кооператив председателĕнче, Красноармейски районĕнчи «Таябинка» агрофирма директорĕнче, Вăрнарти аш-какай комбиначĕн генеральнăй директорĕнче ĕçленĕ. 2011 çулхи раштавăн 4-мĕшĕнче ЧР Патшалăх Канашĕн депутатне суйланнă.**

**2011 çулхи раштав уйăхĕн 15-мĕшĕнчен – Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕ.**

**«Чăваш Республикин ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ятпа, РФ Ял хуçалăх министерствин Хисеп грамотипе, Ылтăн медалĕпе, Чăваш Республикин Президенчĕн Тав сăмахĕпе наградăланă.**

**Мăшăрĕпе виçĕ ача çитĕнтереççĕ.**

Енре пурăнакан çынсен кашни сийне, республикăри кашни отрасле пырса тивеççĕ. Саккунра çирĕплетнине пурнăçласа хамăрăн экономикăна малалла аталантаратпăр, социаллă пурнăçа хăват паратпăр: çуртсем, шкулсем, ача сачĕсем, çулсем, сиплевпе кану, культура учрежденийĕсем, сывлăха çирĕплетмелли комплекссем... тăватпăр. Бюджетниксене шалу тӳлес, тивĕçлĕ канăва тухнисене пенси парас ĕç-хĕл те асăннă саккунпа килĕшӳллĕн пулса пырать.

Вун-вун сĕнӳ-канаша комитетсенче тĕрлĕ енлĕ тишкернине шута илсен вĕрентӳпе, ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсемпе тухăçлă усă курассипе, çуртйĕрпе коммуналлă хуçалăх ĕç-хĕлне тивĕçлĕ йĕркелессипе, предприятисенче инвалидсем валли ĕç вырăнĕсем туса парассипе çыхăннă саккунсем те асăмра юлчĕç теессĕм килет.

**– Эсир ĕçлеме пикеннĕ чухне парламента шанаслăх халăх хушшинче пысăках марччĕ. Халĕ еплерех? «Паянхи депутатсем «халăх тарçи» ăнлава чăннипех те тивĕçлĕ», – теме пултаратăр-и?**

– Ыйтăвун пĕрремĕш пайĕпе килĕшессĕмех килмест. Пирĕн умĕнхи депутатсем те ĕç нумай тунă. Парламент, республика историйĕнче хăйсен пархатарлă йĕрне хăварнă. Эпĕ яланах çапла калатăп: суйлавçăсем пире шанса хăйсен сассине панă тăк – çав шанăçа тӳрре кăлармалла, вĕсемшĕн, тăван халăхшăн çанă тавăрса ĕçлесе «халăх тарçи» ăнлава чăннипех те тивĕçлĕ пулмалла.

**– Черетлĕ ыйтăва «çĕнĕ шăпăр çĕнĕлле шăлать» сăмахсен тĕшшипе усă курса парас килет. Парламент пурнăçне мĕнлерех çĕнĕлĕхсем кĕртрĕр?**

– Çĕнĕлĕх нумай. Саккунсене çынсем валли хатĕрленине тĕпе хурса, вĕсен пахалăхне ӳстерес тĕллевпе халăх шухăшкăмăлне пĕлмешкĕн, сĕнĕвĕсемпе усă курмашкăн парламент итлевĕсем, «çавра сĕтелсем» кашни кварталтах йĕркелеме тытăнтăмăр. Тĕрлĕ сферăра ĕçлекенсем ку ĕçе активлă хутшăнни, хăйсене мĕн пăшăрхантарнине, кăсăклантарнине уççăн пĕлтерни пире тĕрĕс çулпа пыма, саккунсене кăлтăксемсĕр йышăнма май парать. Комитетсен ларăвĕсене вырăна тухса, суйлавçăсемпе куçа-куçăн калаçса ирттерни те саккун кăларас ĕçе çăмăллатать.

Малалла каяс тесессĕн пĕр-пĕрин опытне пĕлни, тишкерни питех те кирлĕ. Тĕрлĕ регионта тăтăшах пулатпăр, хамăр пата та час-часах килеççĕ. Сăмахран, ЧР Патшалăх Канашĕн çирĕпленĕвĕпе аталанăвне, саккун кăларас ĕçе лайăхлатассине халалланă наука-практика конференцине Мускавран, Хусантан, Кировран... депутатсем килчĕç. Пирĕн парламентаризмăн 20 çулхи ĕç-хĕлне тĕплĕ çутатрĕç, сĕнӳ-канаш чылай пачĕç.

**– Юрий Алексеевич, эсир каларăр ĕнтĕ, Чăваш Республикин Патшалăх Канашне йĕркеленĕренпе кĕçех 20 çул çитет. Çак тапхăрта хирĕç тăруллă самантсем те пулнине картса тĕрлĕ суйлаври депутатсен корпусĕн ĕç-хĕлне хăвăр мĕнле хаклатăр?**

– Патшалăх Канашĕ йĕркеленнĕ чухне пĕрремĕш суйлаври депутатсене питĕ йывăр пулнă тесшĕн. Вăл вăхăтра, план экономикипе пурăннă совет тытăмĕнчен рынок экономики çине куçнă чухне, çĕнĕ саккун вун-вун кирлĕ пулнă. Кашниех – парламент, правительство, партисемпе юхăмсем – хăйсен сĕнĕвĕ-шухăшне саккунсене кĕртессишĕн тăрăшнă. Çавна май хирĕç тăруллă самант та пĕрре кăна мар сике-сике тухнă. Пурне те пĕтĕçтерекен çураçулăх çитменренех-тĕр Чăваш Республикин Тĕп Саккунне те тепĕр ултă çултан тин иккĕмĕш суйлаври депутатсем йышăннă. Ку – пирĕн истори, пирĕн чăнлăх. Никама та хурлас шухăшăм çук. Мĕншĕн тесен вĕсем пурте халăх ырлăхĕшĕнех ĕçленĕ.

**– Патшалăх Думине Чăваш Республикинчен суйланнă депутатсем саккунсем хатĕрлес тивĕçĕсĕр пуçне республикăмăра аталантарма мĕнпе пулăшаççĕ? Çак сăмахсенех сенаторсем пирки те калассăм килет.**

– Ĕçлеççĕ, тăрăшаççĕ. Вĕрентӳ комитетĕнче ĕçлекен Алена Аршинова федераци тытăмĕсенчен укçа куçарттарса республикăра ача сачĕсем тума нумай пулăшать. Л.Лебедевпа Г.Николаева сенаторсем те тĕрлĕ ыйтупа пысăк тĕрев параççĕ. Федераци Канашĕнче Чăваш Республикин Кунĕсем лайăх иртнинче те вĕсен тӳпи сахалах мар.

Малтан республика Пуçлăхĕ Михаил Васильевич Игнатьев калаçрĕ. Сенаторсене хамăрăн экономикăпа, социаллă пурнăçпа тĕплĕ паллаштарчĕ. Эпĕ саккун кăларас ĕç-хĕл тавра сăмах пуçармарăм. Чăваш çĕршывĕ виçĕ космонавт çитĕнтернине палăртса Шупашкарта Планетари комплексĕ тумашкăн пулăшма ыйтрăм. Ку шухăша пурте ырларĕç, ятарлă йышăну турĕç. Валентина Матвиенко спикер пирĕн ĕмĕте пурнăçа кĕртме сенаторсен умне тĕллевсем лартрĕ.

**– Каçарăр та, федераци программисене сахаллатнине, Олимпиада ирттерме укçа нумай тăкакланине, Крыма кĕмĕлпе, пурлăхпа пулăшмаллине шута илсе Раççей Правительстви планетари тума миллиард тенке яхăн парасси, темшĕн, иккĕлентерет.**

– Вăл, паллах, çывăх кунсенче пулакан ĕç мар. Хальхи вăхăтра проект хатĕрлесси пырать. Унсăрăн, проектпа смета документацийĕсĕр, ăна экспертиза витĕр кăлармасăр, ĕçе пикенме пултараймастпăр. Шанчăка çухатмастпăр. Планетари пулатех.

**– Министрсемпе Патшалăх Канашĕн депутачĕсем Чăваш Республикин гербĕллĕ значокпа çӳренине курмассерен куç умне Совет Союзĕн мĕн пур кĕтесĕнче пĕлнĕ чăваш хăмли тухса тăрать. Халăхăмăрăн хăйне евĕрлĕ бренчĕ нивушлĕ герб çинче кăна юлĕ?**

**– Юрий Алексеевич, Чăваш Республикин Патшалăх Канашне Эсир икĕ çул ытла ертсе пыратăр. Çак вăхăтра депутатсен корпусĕ вун-вун саккун хатĕрлесе йышăнчĕ. Вĕсене хаçат вулакансем лайăх пĕлнĕрен пӳрне хуçса шутласа тухмăпăр. Калăр-ха: чи асра юлнисем хăшĕсем?**

– Парламент йышăннă саккунсем пурте пĕлтерĕшлĕ. Нихăшне те пĕри кирлĕрех те тепри аплах мар тесе уйăрма кирлĕ мар. Вĕсене пĕтĕмпех республикăмăра сулмаклă аталантарас, халăхăмăрăн пурнăçне лайăхлатас тĕллевпе кăларатпăр. Çапах та, халĕ калас шухăшăмпа кирек кам та килĕшет пулĕ, бюджет çинчен йышăнакан саккун капашĕпе ыттисенчен уйăрăларах тăрать. Мĕншĕн тесен унта палăртнисем Чăваш

– Вăт ку, мĕнле каламалла, питĕ шухăшлаттаракан ыйту. Тĕрĕссипе, Раççейри хăмлан 90 процентне паян та эпирех, чăвашсемех, туса илетпĕр. Анчах та пахалăх тĕлĕшпе Европăран самаях юлтăмăр, конкуренцие чăтайми пултăмăр. Ку ĕçре – лайăх сортсем, лартмалли, татмалли, тирпейлемелли ятарлă техника-оборудовани туянса, упрамалли объектсем туса, усламлă вырнаçтармалли çыхăнусем йĕркелесе хамăрăн хăмла отраслне чĕртсе тăратассинче – патшалăх пулăшăвĕсĕр май килместех. Çавăнпах ĕнтĕ парламентăн пĕр ларăвĕнче хăмла темине анлă тишкерсе, ăна çĕнĕ технологисемпе туса илме пирĕн условисем те, специалистсем те, вĕсене малашне те çителĕклĕ вĕрентсе кăларма Ял хуçалăх академийĕ те пуррине палăртса РФ Правительствин Пуçлăхĕпе РФ Патшалăх Думин Председателĕ патне официаллă Çырусем ятăмăр. Пирĕн пуçарăва ăнланса йышăнасса, вăл пулăшупа вĕçленессе шанатпăр.

**– «Республика Пуçлăхĕ икĕ çунатлă пулмалла. Пĕр çуначĕ – патшалăх институчĕсем, тепри – халăх: вăл вара, ăна пĕтĕçтерекенĕ, Чăваш наци конгресĕ. Пĕр çунатти – çирĕп, тепри хавшак тăк «ăмăрткайăк» темле тăрăшсан та хăватлă, сулăмлă вĕçеймĕ», – тенĕччĕ пĕлĕшĕм. Иккĕмĕш çунатăн – ЧНКн – тĕревне Эсир, республика ертӳçисем, туятăр-и? Туятăр пулсан – мĕнлерех ĕçсенче?**

– Малтанах çакна каласа хăварам. Михаил Васильевич Игнатьев Чăваш Ен Пуçлăхĕнче ĕçлеме тытăннă хыççăнах кӳршĕсемпе татăлнă туслă çыхăнăва хăвăрт йĕркелесе ятăмăр. Тутарстан, Пушкăртстан, Мордва, Мари Эл республикисемпе, Чĕмпĕр, Киров, Ярославль, Чул хула тата ытти облаçсемпе пĕр-пĕринпе килĕштерсе те пулăшса пурăнмалли Килĕшӳсене алă пусса çирĕплетрĕмĕр. Асăннă тăрăхсенчи Чăваш наци культура автономийĕсен хастарĕсемпе тĕл пултăмăр, пĕрле пурнăçламалли тĕллевсене палăртрăмăр. ЧНК президентне Николай Угаслова суйланă хыççăн ку ĕç тата сулмаклăрах аталанасса шанатпăр, ăна халех ĕнтĕ туятпăр. Унăн авторитечĕ, пурнăç опычĕ йăхташăмăрсене пĕтĕçтерес, вĕсен çивĕч ыйтăвĕсене татса парас ĕç-хĕлте витĕмлĕ пулăшу кӳрĕ. Тулашра пурăнакан йăхташăмăрсене манмалла мар. Тăтăшах тухса çӳресе, хамăр пата та чĕнсе пĕрлехи ыйтусене уçăмлатмалла, пĕр-пĕрне пулăшмалла. Пархатарлă ку ĕçе тĕрлĕ регионта пурăнакан чăваш усламçисене хастартарах хутшăнтармалла.

**– Юлашки 20 çулта чăваш халăхĕ 400 пин чакрĕ. Çак тĕнчере сыхланса юлас тесен малашне мĕн тумалла? Мĕнле çул-йĕрпе аталанмалла? Йăхташăмăрсенче чăвашлăх туртăмне мĕнле вăйлатмалла? Юрий Алексеевич, çак тата ытти ыйтăва тишкерсе ятарлă программа хатĕрлеме вăхăт çитмерĕ-и?**

– Тĕрĕсех. Çакна чи пирвай çĕнĕ саманан йывăрлăхĕсем, малашлăх уçăмлă курăнманни пысăк витĕм кӳчĕç – ача çуратасси хăвăрт сахалланчĕ. Шĕкĕр Турра, лару-тăру ырă енне сулăнчĕ. Тĕрлĕ программăна саккунпа çирĕплетнĕрен юлашки икĕ çулта ача çураласси ӳсрĕ, вилесси чакрĕ. Чăвашлăха упраса хăварасси вара республика ертӳлĕхĕнчен çеç мар, пĕтĕм общество тачă çыхăнса ĕçленинчен, лава унталла та кунталла сулăнтармасăр малалла туртнинчен килет. Пархатарлă ку ĕçре те Чăваш наци конгресĕ влаç институчĕсемпе пĕрле лав пуçĕнче пымалла.

**– «Раççейри чи çӳллĕ флагшток» проектпа килĕшӳллĕн Раççей ялавне пилĕк хулара вырнаçтарасшăн. Проект ертӳçисем çак ушкăна Шупашкара кĕртме тĕв тунине чăваш хастарĕсемпе ăсчахсем кăмăлласах йышăнмарĕç: «Наци республикисенчен нихăшĕ те килĕшмен пулĕ те – пире çураçтарасшăн, чăвашсем, кирек мĕн сĕнсен те, хирĕçлеме хăяймаççĕ теççĕ-тĕр». Калăр-ха – кирлех-и пире 246 миллион тенкĕ тăракан флагшток? Çитменнине, асăннă кĕмĕлĕн пĕр пайне хамăра тӳлеттересшĕн.**

– Тытман упа тирне вăхăт çитмесĕрех сĕвер мар-ха. Ыйтăва татса паман. Проект ертӳçисен сĕнĕвне тĕрлĕ енлĕ тишкеретпĕр. Манăн шухăшпа, сумлă флагштоксенчен пĕрне Шупашкарта вырнаçтарма тĕллев тытнинче япăххине курмастăп. Пачах тепĕр май: ăна республикăра пурăнакан тĕрлĕ халăх çыннисене пĕрлештерекен, патриотлăха вăйлатакан, шалти туйăма çĕклентерме хăват паракан пулăм вырăнне хуратăп. Федераци укçа-тенкĕпе пулăшсан, ниме мелĕпе хамăр та хутшăнсан ку ĕçĕн сумĕ, кирлĕлĕхĕ пушшех те ӳсĕ.

**– Эпир кая юлса шухăшлатпăр. Питĕ нумай манăçтаратпăр. Чылай чухне хамăрăн çитĕнӳсене те курма, хаклама пĕлместпĕр. Мĕн пулса иртет пирĕнпе? Ăçта, мĕнре паянхи кунпа çеç пурăнаслăхăн тымарĕ?**

– Вăл иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче амаланса кайрĕ. Çав тери йывăр та синкерлĕ çулсем пулчĕç вĕсем. Кашниех мĕн те пулин тупас, тепĕр çĕрте сутас, çапла майпа пурнăçне йӳнеçтерес шухăшпа пурăнчĕ. Пăтрануллă, хирĕç тăруллă çулсенче пурнăç никĕсĕ – ырă пахалăхсем, ĕмĕрсем хушши тĕвĕленнĕ йăла-йĕрке, кăмăл-сипет... – хавшарĕ. Çапах та аркатуллă çав саманаран тĕрĕс-тĕкел тухма, пурнăçăн чăн çулне тупма хевте çитертĕмĕр. Кун-çул йĕрки тĕрĕс вырнаçăнчĕ. Ыранхи, малашлăхри уçăмлăх янкăр курăннăран пĕр кунпа пурăннин синкерлĕхĕ асăмăрсенче çеç юлчĕ.

**– Юрий Алексеевич, калăр-ха, Попов хушамат хăçан тата мĕне тĕпе хурса никĕсленнĕ? Сирĕн тăхăмăрсенче чиркӳ çыннисем пулман-и, хушамат «поп» /пуп, пачăшкă/ сăмахран тĕвĕленмен-и?**

– Çавăнтан пуçланса кайнă. Пирĕн йăхра пачăшкăсем пулнă. Сăмах май, Попов хушамат Раççейре чи анлă сарăлнă хушаматсенчен пĕри шутланать. Йышĕпе пиллĕкмĕш вырăнта.

**– Малароахри тăваттăшĕ хăшĕсем?**

– Смирнов, Иванов, Кузнецов, Соколов. Пирĕнни хыççăнхисем – Лебедев, Козлов, Новиков, Морозов, Петров. Асăрхарăр ĕнтĕ, эпир калама хăнăхнă Иванов - Петров - Сидоров чăнлăхпа килĕшсе тăмасть. Чи анлă сарăлнă вунă хушамат йышĕнче Сидоров вуçех çук... Максимов та çук. Пĕлетĕн-и хушамату миçемĕш вырăнта?

**– Çук. Тишкермен.**

– Утмăл пиллĕкмĕшĕнче.

**– Япăхах мар. Эпĕ тата аяларах, анлах сарăлманнисен йышĕнче, пулĕ тесеччĕ... Эсир çичĕ пĕр тăван – тăватă ывăлпа виçĕ хĕр – çитĕннĕ. Вĕсенчен виççĕшĕ – эсĕ, Печча, Ваççа – кире пуканĕ йăтассипе спорт мастерĕсем пулса тăнă. Спортăн çак тĕсне юратма Сире кам хавхалантарнă?**

– Малтан аслă пичче – Петр Алексеевич, каярахпа – Василий Алексеевич.

**– Хăвăр ятăрпа турнир çулсерен йĕркелеме мĕн хĕтĕртрĕ?**

– Кире пуканĕ йăтакансен турнирне ирттерме мана тахçанах, эпĕ Вăрнарти аш-какай комбинатĕнче ĕçленĕ чухнех, темиçе хутчен те сĕннĕччĕ. «Хăйĕн ячĕпе турнир йĕркелесе мухтава тухасшăн», – тесе сăмах-юмах сарасран яланах вăтанаттăм, аван марланаттăм. Патшалăх Канашĕн Председателĕнче ĕçлеме тытăнсан аслă юлташăмсем ку ыйтăва каллех çĕклерĕç. «Турнир хăвăншăн мар, санăн ятушăн та мар, вăл кире пуканĕн спортне аталантармашкăн, спортăн çак тĕсне çамрăксене явăçтармашкăн кирлĕ», – терĕç. Хирĕçлеймерĕм вара – килĕшрĕм. Турнир шайĕ ӳссе пынине, тупăшăва хутшăнакан çамрăк йыш çулсерен пысăкланнине, тĕрлĕ регионтан та çĕр-çĕр спортсмен килнине курсан юлташăмсен сĕнĕвĕ тĕрĕс пулнине çирĕппĕнех ĕнентĕм.

**– Сирĕн йăх спортпа çав тери туслине Сочири Олимпиадăна кайса курма Эсир çур çул каяллах планлани те яр уççăн çирĕплетет. Мĕнлерех çутă тĕссемпе асра юлчĕ Олимпиада?**

– Олимпиадăна кайса курас шухăш манăн пулман. Кăмăл-туйăма хĕрĕм Дарья, спорт гимнастики енĕпе Раççей спорчĕн мастерĕ, улăштарчĕ. Унăн ĕмĕтне пурнăçа кĕртнĕшĕн халĕ хам та хĕпĕртетĕп. Мĕншĕн тесен Сочире мĕн курни ăсăм-пуçăмпа шалти туйăма нимĕнпе те танлаштарма çук çĕклентерсе ячĕ. Эпĕ ултă-çичĕ çул каялла Сочире пулнăччĕ. Улшăну çĕрпе пĕлĕт евĕрех: чаплă çуртсем, çулсем, спорт объекчĕсем, вокзалсем, аэропорт куçа шартарса илĕртеççĕ. Кун пек инфраструктурăна эпĕ нихăш çĕр-шывра та курман. Раççей хăватне спортсменсем те çирĕплетни, пĕрремĕш вырăна тухни асăмра яланлăхах çырăнса, ӳкерĕнсе юлчĕç.

## БЛИЦ-ИНТЕРВЬЮ

■ **Чăваш халăхĕ Раççей, тĕнче умĕнче паян мĕнпе мăнаçланма пултарать?**

Уçă кăмăлĕпе, ĕçлеме пултараслăхпа, мухтавлă çыннисемпе.

■ **Пуянсемпе чухăнсен хушшинчи уйрăмлăх пысăкланса пыни Сире шиклентермест-и?**

Ертӳçĕн тĕрĕслĕх, çынсем пирки чи малтан шухăшламалла, тивĕçлĕ шалу тӳлемелле. Пуянлăха вăрласа мар, хăйĕн ăсĕ-тăнĕпе, тар тăкса ĕçлесе тумалла.

■ **Укçаллă чиновниксемпе пуçлăхсем взятка илме чарăнманни мĕнрен тесе шухăшлатăр?**

Культура шайĕ çитменнинчен.

■ **Çивĕч ыйтусене татса панă чухне шалти туйăмсем пĕр-пĕрне хирĕçлени Сирĕн пулать-и?**

Манăн шалти туйăмсем пĕр-пĕринпе тава кĕрсе хирĕçмеççĕ. Вĕсемпе лăпкăн канашласа чи тĕрĕссине суйласа илетĕп.

■ **Мĕнле пахалăхсене пула Эсир комбинат гендиректорĕнчен республика влаçĕн иккĕмĕш çынни таран çĕкленме пултартăр?**

Çынсене нихăçан та улталаманран, панă сăмаха çирĕп те тĕллевлĕ пурнăçланăран.

■ **Хăвăрăн кун-çул историне тата мĕн туса çĕнетме /пуянлатма/ планлатăр-ĕмĕтленетĕр?**

Хам пуянлатаймастăп. Халăх валли ырă ĕç нумай туса парсан ăна халăх пуянлатма пултарать.

■ **Арçынра чи пĕлтерĕшли мĕн пулмалла?**

Арçын – арçын пулмалла.

■ **Аçӳ-аннӳнтен ăс илни паллă-ха, халăхăмăрăн хăш ăсне ăша хыврăр?**

Халăха итлеме пĕлни – чи паха ăс, тăн. Халăх тĕрĕс маррине нихăçан та каламасть.

■ **Нумаях пулмасть 90 çул тултарнă аннӳне – Елена Ивановнăна – мĕн парнелерĕр?**

Чĕрери чи ăшă сăмахсене... Пире çут тĕнчене илсе килнĕ Аннешĕн пысăкран та пысăк, хаклă парне – эпир ырă-сывă пурăнни, малашлăха курса-планласа тăрăшса ĕçлени, хамăрăн йăхăн пархатарлă ятне çĕре ӳкерменни.

**Кăларăма Геннадий МАКСИМОВ хатĕрленĕ**















Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ: 20 çул

КЛИПS

КУЛЬТУРА

ЛИТЕРАТУРА

ИСТОРИ

ПОЛИТИКА

СПОРТ

ВЫРӐНТИ ХӐЙ ТЫТӐМЛӐХ

*Хастар*

# Мухтав паллине тивӗҫрӗ

***Вырӑнти хӑй тытӑмлӑх кунне палӑртнӑ самантра Красноармейски районӗнчи Кӗҫӗн Шетмӗ ял тӑрӑхӗн ертсе пыракан специалист экспертне Г.Ефимовӑна «Чӑваш Республикинчи вырӑнти хӑй тытӑмлӑх органӗсенче тӳрӗ кӑмӑлпа ӗҫленӗшӗн» виҫҫӗмӗш номерлӗ Мухтав паллипе чысларӗҫ.***



Влаҫ аталанӑвне пысӑк тӳпе хывнӑшӑн тивӗҫрӗ ӑна Галина Георгиевна. Уявра ҫак наградӑна Трак енри хастара Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗ Михаил Игнатьев пачӗ /*сӑн ӳкерчӗкре*/.

Ку тытӑма Г.Ефимова 1993 ҫулта килнӗ. Малтанах Яманак ял тӑрӑхӗн администрацийӗнче ҫӗр йӗркелӳҫӗре ӗҫленӗ, 2006 ҫултанпа – Кӗҫӗн Шетмӗ ял тӑрӑхӗн ертсе пыракан специалисчӗ. Яланах пуҫарулӑхпа палӑрать. 2002 тата 2006 ҫулсенчи Пӗтӗм Раҫҫейри ял хуҫалӑх тата 2010 ҫулхи халӑх ҫыравӗсене хатӗрленсе ирттерме пысӑк хастарлӑхпа хутшӑнчӗ. Ял тӑрӑхӗн архив фондне йӗркелеме, ялсене тирпей-илем кӗртессипе республикӑри конкурса хутшӑнма хатӗрленмешкӗн сумлӑ тӳпе хывать. 2012 ҫулта Галина Георгиевна «Чӑваш Республикинчи муниципалитетӑн чи лайӑх служащийӗ» конкурсӑн районти тапхӑрӗнче мала тухрӗ. Ҫав ҫулах ЧР Патшалӑх Канашӗн Хисеп хутне тивӗҫрӗ. Ытти награда та чылай унӑн. Общество организацийӗсемпе тачӑ ҫыхӑну тытать. Вырӑнти хӗрарӑмсен канашӗн членӗ. Ҫамрӑксен хушшинче сывӑ пурнӑҫ йӗркине сарма тӑрӑшать, спорт ӑмӑртӑвӗсене хутшӑнать, тӑтӑшах малти вырӑнсене йышӑнать. Мӑшӑрӗпе – Василий Яковлевичпа – ывӑлпа хӗр ҫитӗнтерчӗҫ, аслӑ пӗлӳ пачӗҫ. Вӗсен ҫемйинче халӗ усрав хӗр кил ӑшши тупнӑ.

■ **Виктор ДАНИЛОВ.**
Автор сӑн ӳкерчӗкӗ

*Ахрӑм*

# «Влаҫӑн та пуҫарулӑхӗ кирлӗ»

***Асӑннӑ статья /«Хыпар», 2014, ака, 12/ авторӗ Ревокат Моисеев питӗ кирлӗ, ҫивӗч ыйту хускатнӑ. Апла тӑк ку пӗр ҫын шухӑшӗ кӑна мар. Вӑл чылайӑшне хумхантарать: «Ас тӑвӑма» тепӗр хут хатӗрлемеллех! Ҫӗнтерӳпе таврӑннисен хушамат-сӑнӗсене кӗртсех ҫӗнӗ кӑларӑм тӑвасчӗ.***

Эпӗ ҫуралса ӳснӗ Вӑта Пукашран та унта чылайӑн кӗрейместӗр юлнӑ. Вӗсен шутӗнче – пӗр тӑван Смеловсем. Пайӑррӑн каласан – кукаҫин шӑллӗн ывӑлӗсем: Иванпа Константин Смелов офицерсем. Иван район центрӗнче, Константин Самарта тӗпленнӗ. Иккӗшӗн хушамачӗ те Кӗнеке-палӑкра ҫук.

Асаттен пиччӗшӗн усрав ывӑлӗ Максим Шашков вӑрҫӑ хыҫҫӑн Пермь облаҫӗнчи /халӗ – край/ пӗр ялта пурӑннӑ. Алли йывӑр сусӑрланнӑ пулин те трактор-комбайн ҫинчен анман... Петр Коротков Тутарстанри Аксура прокурор пулнӑ. П.Хусанкайсем патӗнче хваттерленнӗ. Паттӑрсен вилӗмӗпе пуҫ хунӑ. Унӑн ятне те тупаймастӑн. Кукамай шӑллӗ Иван Журавлев Сӗнтӗрвӑрри район центрӗнче вӑй хунӑ, Петр Коротков офицер Киевра, Иван Семенов учитель хамӑр районти Турханкассинче тӗпленнипе кӗреймен-ши кӗнекене?

Перан Микули ҫӑм арманҫи, Никитинсем Ҫармӑсра пурӑнние – кӗмесӗр юлнисем. Фронтран урасӑр таврӑннӑ Николай Фомин /Хомок Коли/ та вилнӗ хыҫҫӑн ҫав кӗнекене кӗме темшӗн тивӗҫмен. Вӗсем пирки ял тӑрӑхӗн администрацийӗнче ӗҫлекенсен ватӑсенчен ыйтса пӗлмеллех пулнӑ ӗнтӗ!

Кашни ялтах тенӗ пек вӑрҫӑра пуҫ хунисене асӑнса лартнӑ палӑк пур. Анчах вӗсем ҫине ҫыпӑҫтарнӑ плитасем ҫинчи ятхушамат тӗссӗрленнӗ. Ҫӗнетсех тӑма ыйтсан вырӑнти влаҫрисем сӗнӳ паракан ҫине сиввӗн пӑхни те пулнӑ. Чечек кӑшӑлӗ е ҫыххине вӑрттӑн пырса хурса хӑвараҫҫӗ: митингсӑр, пухусӑр...

Фронтран чӗрӗ-сывӑ таврӑнса кайран пурнӑҫран уйрӑлса кайнисем те манӑҫсах пыраҫҫӗ. Вӗсен хушамачӗсем те вилнисен палӑкӗ ҫинче пулмалла! Чылай ялта ҫапла тӑваҫҫӗ те. «Ас тӑвӑма» ҫӗнӗ ятсемпе тӑсасчӗ. Кунта чӑннипех те влаҫӑн пуҫарулӑх кӑтартмалла.

■ **Анатолий МАКСИМОВ.**
Сӗнтӗрвӑрри районӗ

# Пуриншӗн те ҫывӑх ят

***Ҫак кунсенче республика общественноҫӗ Чӑваш халӑх поэчӗ Ҫемен Элкер ҫуралнӑранпа 120 ҫул ҫитнине чыслӑн паллӑ тӑвать. Йӗпреҫ тӑрӑхӗнче пурӑнакансене вара тӑван литературӑна хӑйӗн чаплӑ хайлавӗсемпе пуянлатнӑ ҫыравҫӑ Пысӑк Упакассинче ҫуралса ӳсни тивӗҫлипех мӑнаҫлантарать. Паян Семен Васильевичӑн тӑван ялӗнче ҫак ятпа ӑслӑлӑхпа практика конференцийӗ иртет. Унта чӑваш писателӗсемпе поэчӗсем, искусство ӑстисем кӑна мар, «Кушлавӑш тӑрӑхне кӗрекен вун икӗ ял уйӗнче» вырнаҫнӑ ял тӑрӑхӗсен администрацийӗсен сумлӑ делегацийӗсем те хутшӑнаҫҫӗ. Ҫак мероприяти умӗн пирӗн корреспондент вӗсен ертӳҫисемпе курса калаҫнӑ.***

**Евгений Ерилеев, Йӗпреҫ районӗнчи Пысӑк Упакасси ял тӑрӑхӗн пуҫлӑхӗ:**

– Авалхи чӑваш ялӗнче, хӑйӗн ҫутӑ хумӗсене Ҫавала хӑвалакан Кушлавӑш юхан шывӗ ҫыххӗнчи Пысӑк Упакассинче кун ҫути курнӑ пултаруллӑ ҫын чӑваш литературин тӳпинче ҫутнӑ ҫӑлтӑр паян та тап-тасан ялтӑртатса ҫунни пире, унӑн ентешӗсене, чӑннипех савӑнтарать. Чӑваш халӑх поэчӗн юбилейне кӗтсе илме хатӗрленсе пӗрлехи йышпа сахал мар ӗҫ пурнӑҫларӑмӑр. Элкер урамӗнче те, ытти урамра та – тасалӑхпа тирпейлӗх. Поэт ячӗллӗ пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан тӗп шкулта вӗренекенсем сад-вӑрман уйӑхлӑхне хутшӑнса Элкер скверне ҫӗнӗ хунавсем лартрӗҫ.

Тӗп ялти тӗслӗх вулавӑшра тата шкулти Элкер музейӗнче юбилейпа ҫыхӑннӑ темиҫе мероприяти ирттертӗмӗр. Вӗсем кӑсӑк тата тивӗҫлӗ шайра иртчӗр тесе вӗрентекенсемпе вӗренекенсем те, культура учрежденийӗсенче ӗҫлекенсем те, ял тӑрӑхӗн администрацийӗн специалисчӗсем те нумай тӑрӑшрӗҫ.

Семен Васильевич – пирӗн йӑх-несӗлшӗн ҫывӑх та хаклӑ ят. Вӑл хӑйӗн вилӗмсӗр «Хӗн-хур айӗнче» поэминче Ериле мучие ӑшшӑн сӑнарласа кӑтартнӑ. Ериле мучи – пирӗн хушамата пуҫласа яраканӗ. Темиҫе ӗмӗрте «йӑх йывӑҫҫи» туратланса Упакасси тӑрӑхӗнче чи анлӑ сарӑлнӑ хушаматсенчен пӗри пулса тӑнӑ. Элкер ҫырнӑ «Кушлавӑш уйӗ» очерка ҫак кунсенче тепӗр хут вуласа тухрӑм. Семен Васильевич канӑҫсӑр чун-чӗрелле тавра пӗлӳҫӗ те пулнӑ иккен. Истори пӗлтерӗшлӗ ҫав хайлав паянхи яш-кӗрӗмпе хӗр-упраҫа та шырав ҫулне тақӑрлатсах тӑма хистет.

**Евгений Музяков, Вӑрнар районӗнчи Ершепуҫ ял тӑрӑхӗн пуҫлӑхӗ:**

– Ҫемен Элкер кӗнекисемпе шкулта вӗреннӗ чухнех паллашнӑ. Манӑн асӑмра вара нимӗнле йывӑрлӑх умӗнче те пуҫ усман Чакка сӑнарӗ яланлӑхах «тӗрленсе» юлнӑ. Эпӗ кӑна мар, пирӗн тӑрӑхри ытти ҫын та ҫак сӑнарта шанчӑк паракан вӑя курать. Ахальтен мар Кушлавӑш тӑрӑхне кӗрекен ялсенче «Эпир – Чакка йӑхӗнчен» каларӑш хӑйӗн тивӗҫлӗ вырӑнне тупнӑ.

Чӑваш халӑх поэчӗн «Кушлавӑш уйӗ» истори очеркӗ, паянхи вӑхӑт тӳпинчен пӑхсан та пысӑк пӗлтерӗшлӗ произведени. Семен Васильевич Ершепуҫ, Кӳстӳмӗр тата Отиккево ялӗсен кунҫулне, вӗсен ҫыннисен пурнӑҫӗпе ӗҫне-хӗлне тимлӗн, тӑрӑшуллӑн тӗпчесе килес ӑру валли чӑннипех паха парне хӑварнӑ. Ҫавӑншӑн ӑна пысӑк тав.

**Евгений Нараткин, Вӑрнар районӗнчи Кульцав ял тӑрӑхӗн пуҫлӑхӗ:**

– Кушлавӑшпа Пӑтавӑш юхан шывӗсем пӗрлешнӗ вырӑнта никӗсленӗ Кульцавпа Зеленовка /Алманчӑк/ ялӗсем хӑй вӑхӑтӗнче «Кушлавӑш текен вун икӗ ял уйне» кӗнӗ. Вӗсенче, тӗпрен илсен, вырӑссем пурӑннӑ. Икӗ ялӗ те XVIII ӗмӗр варринче пуҫланса кайнӑ. Семен Васильевич «Хӗн-хур айӗнче» поэмӑра ҫырса кӑтартнӑ ӗҫсем ҫав тапхӑрта пулса иртеҫҫӗ. Эпӗ ҫак хайлавӑн вырӑсла куҫарса кӑларнӑ варианчӗпе нумай пулмасть кӑнакха паллашрӑм. Поэмӑра Кульцав ялӗн вырӑсӗсемпе Кушлавӑш тӑрӑхӗнчи чӑвашсен хушшинчи ҫыхӑнусем мӗнлерех аталанса-йӗркеленсе пыма тытӑнни-не те уҫӑмлӑн ҫырса кӑтартнӑ.

Паян эпир Кушлавӑш тӑрӑхне кӗрекен 12 ял ҫыннисемпе пӗр кил-йыш туйӑмӗпе пурӑнатпӑр. Чӑн та, вун икӗ ялтан пӗри – Зеленовка – халӗ ҫук, иртнӗ ӗмӗрӗн 70-мӗш ҫулӗсен пуҫламӑшӗнче кунти ҫынсем ҫӗр-шывӑн тӗрлӗ кӗтесне куҫса кайнӑ.

Кульцав ял тӑрӑхне тӗп ялсӑр пуҫне тата Кивӗ Мӗлӗшпе Ҫӗнӗ Мӗлӗш ялӗсем кӗреҫҫӗ. Вырӑссемпе чӑвашсем тӑванлӑхпа туслӑх туйӑмӗсене малти вырӑна хурса тата хӑйсене Пахомкӑпа Чакка йӑх-несӗлӗсем пек курса ҫӗнӗ самана хывнӑ ҫулйӗре малалла такӑрлаҫҫӗ.

■ **Геннадий ВАСИЛЬЕВ ҫырса илнӗ**

*Ыйту-хурав*

# Пирӗн пуҫлӑх – нотариус та

**Ял тӑрӑхӗн пуҫлӑхӗ нотариус тивӗҫне те пурнӑҫлама пултарать тени тӗрӗсех-ши?**

**Е.СЕРГЕЕВА.**
Тӑвай районӗ.

РФ Юстици министерствин Чӑваш Республикинчи управленийӗнчен пӗлтернӗ тӑрӑх – федерацин 2008 ҫулта йышӑннӑ 258-мӗш саккунӗнче килӗшуллӗн нотариат ҫук ял тӑрӑхӗсенче ҫак ӗҫе пуҫлӑх хӑй е вӑл ятарлӑ хушупа ҫирӗплетнӗ вырӑнти хӑй тытӑмлӑх органӗн специалисчӗ пурнӑҫлать. Вӗсен 5 тивӗҫе пурнӑҫлама ирӗк пур: шантару хутне, доверенноҫе, документсен копийӗсен чӑнлӑхне, унччен явапла ҫынсем алӑ пуснисене ҫирӗплетеҫҫӗ тата еткере куҫакан пурлӑха управа илеҫҫӗ, кирлӗ пулсан – унпа усӑ курма пултараҫҫӗ.

Ял тӑрӑхӗн пуҫлӑхӗ е унӑн специалисчӗ алӑ пусса, пичет ҫапса ҫирӗплетнӗ документ ҫакна тума тивӗҫлӗ нотариус ҫирӗплетни пекех юридици вӑйӗллӗ. Унсӑр пуҫне вырӑнти хӑй тытӑмлӑх органӗсенчи должноҫри ҫынсен лицензиллӗ нотариус пекех нотариат ӗҫӗсен вӑрттӑнлӑхне упрамалла. Хутсене ҫирӗплетнӗ чухне «усӑлнӑ» хӑш-пӗр факта е пулӑма ыттисене пӗлтерме юрамасть. Ҫак ҫирӗплӗх вырӑнти хӑй тытӑмлӑх органӗнче ӗҫленӗ ҫын урӑх ӗҫе куҫсан е тивӗҫлӗ канӑва кайсан та сыхланса юлать. Саккун суд, прокуратура, следстви органӗсем тата суд приставӗсем ыйтнипе вӗсене кӑна ҫав вӑрттӑнлӑхсене «уҫма» ирӗк парать. Халал хучӗн справкине халал хутне ҫырнӑ ҫын вилни ҫинчен калакан свидетельствӑна кӑтартсан кӑна параҫҫӗ.

Нотариат ӗҫне пурнӑҫланӑшӑн илекен тӳлев хакне /пошлина калӑпӑшне/ РФ Налук кодексӗнче ҫирӗплетнӗ. Ытти РФ нотариат ӗҫ-хӗлне йӗркелекен саккунлӑхпа килӗшуллӗн нотариатӑн ытти тарифӗ те – лицензиллӗ нотариусшӑн та, вырӑнти хӑй тытӑмлӑх органӗн пуҫлӑхӗпе специалисчӗшӗн те – пӗр пек. Нотариатӑн пӗтӗм ӗҫне ял тӑрӑхӗн администрацийӗн пӳлӗмӗнче ирттерни питӗ пӗлтерӗшлӗ. Урӑхла туни – саккуна пӑсни. Саккун ҫапах йывӑр чире пула ҫын влаҫ органне ҫитеймен чухне влаҫ тытӑмӗн явапллӑ ҫыннисене ун патне кайма ирӗк парать. Ҫакна влаҫ тытӑмӗнчи специалист хӑйӗн ял тӑрӑхӗн территорийӗнче кӑна пурнӑҫлама пултарать. Унӑн тулашӗнчи нотариат ӗҫӗ юридици вӑйӗсӗр шутланать.

«Вырӑнти хӑй тытӑмлӑх» проект ЧР Информаци политикипе массӑллӑ коммуникацисен министерстви пулӑшнипе пурнӑҫланать.
Юрий СТЕПАНОВ хатӗрленӗ.● Ҫырӑр: Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчӗ, 13, «Хыпар». ● Шӑнкӑравлӑр: /8352/ 28-85-01.

# ЫЙТУ ХУРАВ

## Паттăр артист

**Шупашкарта Зоя Яковлева урамĕ пур. Çак çын кам пулнине, мĕнле ĕçпе палăрнине пĕлес килет.**

**И.АНИСИМОВА.**
Тăвай районĕ.

Зоя Титовна Яковлева актриса /сцена псевдонимĕ – Павлова/ 1898 çулта Шупашкарта çуралнă. 1924 çулта Хусан театр студийĕнчен вĕренсе тухнă. 1918-1922 çулсенче Шупашкарти халăх çурчĕ çумĕнче йĕркеленнĕ театр коллективĕнче, Чăваш патшалăх академи драма театрĕн вырăс труппинче ĕçленĕ. 1925-1938 çулсенче – Брянск тата Бежецк хулисен, Вологда тата Ленинград облаçĕсен театрĕсен артисчĕ. 1938-1944 çулсенче А.М.Горький ячĕллĕ Крым драма театрĕн /Симферополь хули/ сцени çинче выляна. 100 ытла сăнар калăпланă. Вĕсен шутĕнче: Наташа /М.Горький, "На дне"/, Акулька /И.Спажинский, "Старые годы"/, Улита /А.Островский, "Лес"/ т.ыт.те.

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче Крымра подпольщиксен "Кăйкăр" ушкăнĕнче тăнă. Артистка разведкăна çÿренĕ, вăрттăн информаци пухнă, листовка салатнă... Пĕррехинче ăнсăртран тăшман аллине лекнĕ. 1944 çулта хулана ирĕке кăлариччен виçĕ кун маларах фашистсем З.Яковлевăна театрăн çичĕ ĕçченĕпе пĕрле асаплантарса вĕлернĕ. Ентеше Симферополь хули çывăхĕнчи Дубкири тăванла масарта пытарнă.

Крым подпольщикĕсен паттăрлăхне А.Васильевпа Л.Эльстон пьесисемпе лартнă "Актеры" /Мускав, 1949/ тата "Они были актерами" /Крым драма театрĕ, Симферополь/ спектакльсене, "Они были актерами" илемлĕ фильма /"Мосфильм", 1982/ халалланă. Шупашкарти Вырăс драма театрĕ "Актриса" спектакль /М.Удалов/ лартнă. Тĕп сăнар прообразĕ – З.Яковлева.

## Фильм композиторĕ – пирĕн ентеш

**Пĕрремĕш канал "Переводчик" фильм кăтартрĕ. "Композиторĕ – Алексей Айги" тесе çырнине вуласа юлма ĕлкĕртĕм. Геннадий Айхи ывăлĕ мар-и вăл?**

**С.КИРИЛЛОВ.**
Канаш хули.



"Переводчик" /тепĕр ячĕ "Чарли"/ мини-сериала /режиссерĕ А.Прошкин/ "Марсмедиа" 2013 çулта ÿкернĕ. Кăрлачăн 31-мĕшĕнче Израильте пĕрремĕш хут экран çине кăларнă.

...Фильмри ĕçсем фашистсен оккупацийĕ вăхăтĕнче пулса иртеççĕ. Химии преподавателĕ Андрей Петрович Стариков, "Чарли Чаплин" хушма ят илнĕскер, мăшăрĕпе тата амăшĕпе тĕрлĕ халăх çынни /украин, вырăс, еврей, тутар, эрмен/ хÿтлĕх тупнă кивĕ çуртра пурăнать. Нимĕçсем килни вĕсен пурнăçне тĕпрен улăштарать. Çывăх çыннисене хÿтĕлессишĕн Чарлин фашистсен штабĕнче куçаруçăра ĕçлеме, нацистсене партизансемпе кĕрешме пулăшмашкăн тивет. Тăванĕсемшĕн тăрăшса кÿршĕсене суттине ăнланни мĕскĕн вĕрентекенĕн пурнăçне тÿсме çук йывăрлатать. Юлашкинчен, чăтăмлăхĕ пĕтсе çитсен, халĕччен нимĕнпе те палăрман учитель паттăр пулса тăрать...

Фильма юрă-кĕвĕпе пуянлатаканни, çăнах та, пирĕн мухтавлă ентешĕн Геннадий Айхин ывăлĕ. Алексей Геннадьевич 1971 çулхи утă уйăхĕн 11-мĕшĕнче Мускавра çуралнă. Ипполитов-Иванов ячĕллĕ музыка училищинчен вĕренсе тухнă. Композитор, скрипач, «4'33''» ансамбль ертÿçи. Минимализма çывăх эстетикăра ĕçлет.

Ансамбле Мускавра 1994 çулхи çу уйăхĕнче йĕркеленĕ. Яланхи йыш çук. Ушкăн Айхи хайлавĕсене /импровизацилесе/, Джон Кейдж, Терри Райли, Стив Райх тата ытти автор юрри-кĕввине вылять. Пĕрремĕш хут ансамбль гастрольте Самар хулинче 1996 çулта пулнă. Хальхи вăхăтра Раççей хулисенче, Европа çĕр-шывĕсенче хăйсен пултарулăхĕпе паллаштараççĕ.

"Каменская", "Гибель империи", "Доктор Тырса", "Охотники за бриллиантами", "Зеркала", "Орда" тата ытти вун-вун фильмра Алексей Айги кĕвви янăрать. Унăн пултарулăхне çутатакан вун-вун диск кун çути курнă. Ентеш сумлă тĕрлĕ премие тивĕçнĕ.

## Чĕлхесене танлаштаракан словарь

**Мĕн пур чĕлхен тата вырăнти калаçусен танлаштарулла словарĕ çинчен, унта чăваш сăмахĕсем те кĕни пирки вуласа пĕлтĕм. Мĕнле словарь вăл? Кам пухса хатĕрленĕ? Хăçан кун çути курнă?**

**А.ЗОЛОВ.**
Вăрнар районĕ.




Чĕлхесен тата вырăнти калаçусен танлаштарулла словарĕсем – тăван чĕлхен XVIII ĕмĕр вĕçĕнчи танлаштарулла лексикографи палăкĕсем. Вĕсене II Кĕтерне патша хушăвĕпе П.Паллас ертсе пынă авторсен пысăк ушкăнĕ хатĕрленĕ.

Пĕрремĕш вариант "Сравнительные словари всех языков и наречий, собранные десницею высочайшей особы" ятпа /1 п, 1787; 2 п, 1789/ кун çути курнă. Унта 200 чĕлхе /Европа чĕлхисем – 51, Ази чĕлхисем – 149/ кĕнĕ. Кашнинчен часчасах усă куракан 285 сăмах илнĕ. Малтан вырăслине çырнă, унтан ытти чĕлхери çавăн пек пĕлтерĕшлĕ сăмахсене вырнаçтарнă. Словарьте чăваш чĕлхин материалĕ 64-мĕш тăрать. "Хисепсем" пайра – 70-мĕш вырăнта.

Пĕрремĕш тăракан вырăс сăмахĕсене алфавитпа мар, хăйне евĕрлĕ семантика йĕркипе вырнаçтарнă. Тĕслĕхрен: бог – тора, отец – атте, мать – амăшĕ, амши, дочь – хирь, хирь ача, муж – опушка, упышка, жена – аврум... Хăш-пĕр вырăс сăмахĕ /весна, осень, зима, гром/ валли чăвашлине тупайман е пĕлтерĕшĕ тĕлĕшĕнчен тĕрĕсех марри не çырнă.

Икĕ пай кун çути курнă хыççăн II Кĕтерне патша танлаштаракан чĕлхесен материалне алфавит йĕркипе вырнаçтарса тепĕр словарь кăларма шухăш тытнă. Çĕнĕ кĕнеке Санкт-Петербургра 1790-1791 çулсенче "Сравнительный словарь всех языков и наречий, по азбучному порядку расположенный" ятпа 4 томпа пичетленнĕ. Унта 279 чĕлхен лексика материалĕ кĕнĕ.

Факт /сасăсен янăравне тĕрĕс палăртманни, сăмахсене йăнăш куçарни т.ыт.те/ тата типографи йăнăшĕ сахал мар пулин те словарь тăван çĕр-шыври тата анăçри ăсчахсене чăваш чĕлхипе паллашма, унăн тĕнчери чĕлхесен хушшинчи вырăнне, генетика çыхăнăвĕсене палăртма май паракан паха çăл куç. Унпа, тĕслĕхрен, Ю.Клапрот, А.Бальби, М.Кастрен т.ыт.те час-часах усă курнă.

Словарьте хальхи чĕлхере тĕл пулман сăмах чылай. Вĕсем XVIII ĕмĕрти чăваш чĕлхи лексикине тата сăмахсен йĕркеленĕвне тĕпчеме, этимологине палăртма пулăшаççĕ.

## Ют çĕр-шыв çыннисем – Совет Союзĕн Геройĕсем

**Ют çĕр-шыв çыннисен хушшинче те Совет Союзĕн Геройĕн ятне илнисем пур. Вĕсенчен пĕри, тĕслĕхрен, Фриц Шменкель нимĕç. Мĕнле паттăрлăхшăн чысланă ăна? Урăх патшалăх çыннисенчен çакăн пек пысăк хисепе тата кам тивĕçнĕ?**

**А.СТЕПАНОВ.**
Элĕк районĕ.

Фриц Шменкель ефрейтор /сăн ÿкерчĕкре/ Хĕвел тухăç фрончĕн 186-мĕш пехота дивизине лекнĕ. Анчах Шменкель коммунист Совет Союзне хирĕç çапăçасшăн пулман. 1941 çулхи чÿк уйăхĕнче вăл вермахт çарĕнчен тарнă. Темиçе уйăх ялсем тăрăх çапкаланса çÿренĕ хыççăн партизансен "Фашизма – вилĕм!" отрядне лекнĕ. Малтанхи вăхăтра вермахт ефрейторĕ çине шанмасăртарах пăхнă. Каярахпа Иван Иванович ят панă нимĕçе пысăк операцисене явăçтарма пуçланă.

Пĕррехинче вермахт генералĕн тумне тăхăннă Фриц çул çинче йывăр тиевлĕ машинăна чарнă. Унта партизансене питĕ кирлĕ хĕç-пăшалпа апат-çимĕç туллиех пулнă. Ку Шменкелĕн пархатарлă ĕçĕсен пĕр пĕчĕк пайĕ кăна-ха...

1943 çулхи раштавăн 30-мĕшĕ умĕнхи каç фронт линийĕ урлă каçнă чухне Шменкель тата унпа пĕрле икĕ партизан хыпарсăр çухалнă. Вăрçă хыççăн чылай çул иртсен тин вĕсем тыткăна лекнине пĕлнĕ. Шменкеле Минскра Германин çар сучĕн приговорĕпе асаплантарса вĕлернĕ.

